# Элĕк районĕнче пурăнакан нумай ачаллă çемьесене патшалăх пулăшăвĕпе усă курма мĕн чăрмантарать? ● 4 стр.

● 4 стр.

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

2(820) №, 2014, кăрлач, 18

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

## Хисеплĕ редакторсем, журналистсем, хаçат-журнал, кĕнеке кăларакансем, полиграфистсем!

**Сире професси уявĕ ячĕпе пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп!**

Пресса кирек хăш вăхăтра та общество шухăшлавне йĕркелемелли чи пĕлтерĕшлĕ инструментсенчен пĕри пулнă. Хальхи ĕмĕрте, информатизаци çыннăн пурнăç тивĕçтерĕвĕн пĕтĕм сферине питĕ пысăк хăвăртлăхпа кĕрсе пынă тапхăрта, массăллă информаци хатĕрĕсен общество аталанăвĕнчи пĕлтерĕшĕ татах та ӳсет.

Чăваш Ен Правительствин тĕп тĕллевĕсем – влаç уççăнлăхне ӳстересси, республикăра пурăнакансене пĕлтерĕшлĕ пулăмсем пирки калакан тулли те тĕрĕс информаципе вăхăтра тата васкавлăн тивĕçтересси.

2013 çулта республика конкурсĕ иртнĕ, ăна пула Чăваш Ен медиауçлăхĕ социаллă пĕлтерĕшлĕ 41 проектпа пуянланнă. Патшалăхăн тата патшалăхăн мар массăллă информаци хатĕрĕсем пĕлтерĕшлĕ те çивĕч темăсемпе – сывă пурнăç йĕркине, толерантлă ăс-тăна, çемье, амăшлăхпа ачалăх пахалăхĕсене йĕркелессипе, Чăваш Республикинче пурăнакан халăхсен пултарулăхне тата нацисен хутшăнăвне аталантарассипе, патриотлăх, чунлăх тата кăмăл-сипет пропагандипе – çыхăннă мероприятисене пурнăçа кĕртнĕ. Çĕнтерӳçĕ-проектсем республика бюджетĕнчен 11 млн тенкĕлĕхе яхăн грант пулăшăвĕ илнĕ.

Медиахолдинг туса хунă, унăн тытăмне чăвашла тухакан чи лайăх хаçатсемпе журналсем кĕнĕ, çакă информаципе тивĕçтерессин пахалăхлă çĕнĕ шайне куçма май панĕ. Республикăри муниципалитетсенче учреждени сечĕсен оптимизацийĕ иртнĕ, район пресси малтанхи пекех тиражсене сыхласа хăварать, мĕншĕн тесен ялти вулакансем валли хаçат – информацин тĕп çăл куçĕсенчен пĕри.

Кăçал та пире пĕрлехи вăйпа хамăрăн регионти массăллă информаци хатĕрĕсене аталантармашкăн тата пулăшмашкăн тата нумайрах ĕç тума, республикăн медиауçлăхне çĕнĕ варкăш кĕртме май килессе шансах тăратăп.

Пичет ĕçченĕсемпе ветеранĕсене Чăваш Ен ырлăхĕшĕн хавхаланса ĕçленĕшĕн тав тăватăп, çирĕп сывлăх, пултарулăхра – ăнăçу, телейпе ырăлăх сунатăп.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**М.ИГНАТЬЕВ.**

*Хĕл сиввинчен упа та хăранă.*

Каларăш.




| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 18.01 | - 13 | - 16 |
| 19.01 | - 17 | - 22 |
| 20.01 | - 20 | - 24 |
| 21.01 | - 15 | - 20 |
| 22.01 | - 21 | - 25 |
| 23.01 | - 21 | - 24 |
| 24.01 | - 19 | - 23 |



● М.ТУМАЛАНОВА КОМАНДИРОВКĂРА ИНФОРМАЦИ ПУÇТАРНИПЕ КĂНА ÇЫРЛАХМАСТЬ, ПУЛĂШМА ТА ЯЛАНАХ ХАПĂЛ.

2 стр.

# Темĕнле хăват хуçаланать пирĕнпе

**Хаçата интереслĕ кăларас тесе çĕр çывăрмасăр ĕçлеме те хатĕр эпир. Командировкăна кайсан, тĕслĕхрен, апатланма та манатпăр. Пирĕн çынсемпе ытларах хутшăнас килет. Сăмах çăмхи сӳтĕлме пуçласан, чăн та, вĕçне-хĕрне тупма çук. Пирĕншĕн кашни пулăм кăсăклă.**

**«Çапах тема ăçтан тупатăр?» – тĕпчеççĕ пĕлĕшсем. Юлташ нумай пулни, çул çӳреме юратни, пурнăç уттипе тан пыма тăрăшни пулăшать. Çак ыйтăва тĕплĕнрех хуравлас тĕллевпе алла калем тытрăмăр. Журналистсен пĕр кунĕ мĕнле иртни çинчен вулакансене каласа кăтартас терĕмĕр.**

Пирĕн ĕç кунĕ **8 сехет те 45 минутра** пуçланать. Çапах чылай чухне Пичет çуртне маларах килме хăнăхнă. Пукан çине вырнаçса ларичченех пĕр-пĕр пуçлăх патне шăнкăравламашкăн телефон ярса тытни те пулкалать. Вулаççĕ, пĕлеççĕ пирĕн кăларăма: «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат сумĕ çулсерен ӳссе пыни куç кĕрет! Хулара та 7 сехетченех çывăрмастпăр. Хĕрарăмăн сахал-и килте ĕç? Командировкăна кайма пуçтарăнсан вара 6 сехетрех вокзала васкатпăр.

Паян Алина Изман ĕçтешĕм Куславкка районне тухса кайрĕ. Кирек хăçан та паллă вырăнсенче сăн ӳкерĕнме ӳркенмест вăл. Ку хутĕнче район центрĕнчи Н.М.Лобачевский ячĕллĕ çурт-музейре четвĕрт кĕленчи ун куçĕ тĕлне пулнă. Хăйĕн ĕмĕрĕнче темĕнле кĕрекере те сумлă вырăнта ларнăскере тӳрех ярса тытнă вăл. Хальхи уявсенче унашкаллине кураймăн. Çапах хăйĕн тĕп тивĕçĕ пирки самантлăха та манмасть хастар корреспондент. Яланах нумай хыпар пуçтарса таврăнать.

Малтанхи çул çӳреври мамонт шăлĕсене те хăйĕннипе танлаштарнă, кайăк кăвакалсемпе те чуп тунă, самолет çунатти çине те ларса пăхнă, уйран та уçланă... вăл. Çав сăн ӳкерчĕксене «Одноклассники» сайтри «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçатăн страницинче курма пулать.

**9 сехетре** «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ – тĕп редакторĕ Алексей Леонтьев планеркăна пуçтарать. Ĕç планне пĕрле пăхса тухатпăр, хамăрăн статьясене тишкеретпĕр.

Кайран «Чăваш хĕрарăмĕн» ĕçченĕсем уйрăммăн канашласси йăлара. Ăçта кайса мĕн курни çинчен пĕр-пĕрне каласа кăтартатпăр. Пĕрне, сăмахран, ялти хусахсем качча илме шухăш тытнă. Каласа хăварни ытлашши пулмĕ: хаçат ĕçченĕсем пурте çемьеллĕ, ача-пăчаллă. Çавăнпах мăшăр тупайман çав арçынсен кăмăлне ирĕксĕрех хуçма тивет. Сăмах май, ĕçтешĕмĕр Татьяна Наумова – хальлĕхе декрет отпускĕнче. Çак кунсенче пирĕн йыш хушăнчĕ: декретран тухнă Елена Атаманова çĕнĕ вăйпа ĕçе пуçăнчĕ. Унăн кĕçĕн хĕрĕ кĕçех виççĕ тултарать.

ЖУРНАЛИСТСЕН ПĔР КУНĔ



● ЧЕРЕТЛĔ ЫЙТУСЕНЕ СЎТСЕ ЯВНИНЧЕН ПУÇЛАНАТЬ ПИРĔН ĔÇ КУНĔ.

# Темĕнле хăват хуçаланать пирĕнпе



● А.ИЗМАН КУСЛАВККАРИ МУЗЕЙРЕ: «МИÇЕ ЛИТР КĔРЕТ-ШИ КУНТА!?»

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Çамрăк амăшĕн, каç еннелле садике васканине пула, килте те, ачисене, мăшăрне тутлă апатпа сăйланă, тирпейленĕ – çунă-якатнă хушăрах статья пирки пуç çĕмĕрме тивет.

Маргарита Ильина редакторпа чуна уçса калаçма çăмăл. Ахальтен мар: «Манăн хĕрсем», – тет вăл корреспондентсем пирки. Кирек хăш ыйту хуравне тупма пулăшать пуçлăх. Тĕнче курса çўренĕскерĕн тавра курăмĕ анлă. Çавăнпах вутра та çунас çук, шывра та путас çук эпир унпа.

**11 сехет.** Манăн Пичет кунĕ тĕлне ыйтăм ирттермелле. Республикăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен пуçтарăннă çынсен шухăшне пĕлес килчĕ. Ун пек чухне, паллах, вокзала çул тытмалла. Ял халăхĕпе калаçма ансат та кăмăллă. Унсăр пуçне тĕрлĕ тытăмра ĕçлекенсене те ыйтăма хутшăнтарма палăртрăм. Юлашкинчен çакнашкал пĕтĕмлетў турăм: сутуçăсемпе, фармацевтсемпе пĕр чĕлхе тупма пулать, йĕрке хуралçисенчен вара ыйту хуравне кĕтсе илеймĕн. 3 постри полици ĕçченĕсене «чăрмантартăм» – нихăшĕ те калаçасшăн пулмарĕ. Кинемейсемех нимĕн те пытармаççĕ... Кутамккине, çунашка çинчи миххине автобуса кĕртмех пулăшрăм вĕсене. Телейлĕ çул сунса ăсатрăм. Çакăншăн та савăнчĕç ватăсем.

**13 сехет те 30 минут.** Апат çисе вăй илнĕ хыççăн компьютер умне ларма та юрать. Çырнăçемĕн йăлт куç умне тухса пырать.

Çав вăхăтрах манăн, дежурнăйăн, хаçатăн кашни страницине тимлĕ вулама ĕлкĕрмелле – черетлĕ номерте йăнăш ан кайтăр.

**16 сехет.** Радио валли анонс хатĕрлемелле. Чим, статьясенчен хăшĕ вулакана ытларах кăсăклантарĕ-ши?

**17 сехет те 45 минут.** «Анне, ĕçрен тухрăн-и?» – умлă-хыçлă шăнкăравлаççĕ ачасем. Эх, темĕнле хăват хуçаланать манпа – çырнăçемĕн çырас килет...

Киле вара миçе сехетре каятăп тетĕр-и? Тĕрлĕрен пулать. Ытларах чухне **18 сехетре** ĕç пўлĕмĕн алăкне çăраççипе питĕретĕп. Хаçат тухнă кун каçхи сакăр, тăхăр /е ытларах та/ сехетченех пуç çĕклемесĕр ĕçлетпĕр. Черетлĕ командировкăран та кая юлса таврăннăшăн ўпкелекен çук: çывăх çыннăмсем ăнланаççĕ, хисеплеççĕ ман ĕçе. Хаçат кунне пĕр-пĕр районта ирттернĕ чухне ирхи виçĕ сехетре хваттере çитни те пулнă. Тăххăрта вара, ниме пăхмасăр, ыттисемпе пĕрлех – планеркăра.



● М.ИЛЬИНА: «КАÇ ПУЛАТЬ, СТАТЬЯСЕНЕ МИÇЕ СЕХЕТРЕ КИЛСЕ ПАРАÇÇĔ-ШИ?»

Урамра та, килте те, хăнара та ĕç çинченех шухăшлатпăр. Çакă «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçатра тĕрлĕ ыйту хускатма пулăшать.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**



● Е.АТАМАНОВĂН КИЛЕ ÇИТСЕН ТЕ ПĔР КАНĂÇ ТА ÇУК.

ЫЙТĂМ

# Пĕр кун та хыпарсăр иртмест

**Чăваш Енре пурăнакансенчен ытларахăшĕ /89,9 процент/ телекурав урлă информаци илет. Çапла çирĕплетет Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ ирттернĕ социологи тĕпчевĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Интернет. Ăна ыйтăма хутшăннисен 58,5 процентĕ кăмăллать Чăваш Ен халăхĕн 57,3 проценчĕ вара хыпара хаçатсем урлă пĕлет. Радио тăваттăмĕш вырăн йышăннă. Ăна респондентсен 47,2 проценчĕ юратса итлет. Республикăра пурăнакансен 75 проценчĕ /18-24 çултисем/ кулленех Интернетпа усă курать. Аслă ăру вара массăллă информаци хатĕрĕсене /телекурав, радио тата хаçатсем/ мала хурать. 55 çулран аслăраххисен 85 проценчĕ телевизорсăр пачах та пурăнаймасть. Радио итлекенсен хисепĕ те пĕчĕкех мар, 41 процентпа танлашать. Халăхăн 28,9 проценчĕ хаçат-журналпа туслă.**

**«Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат ĕçченĕсем Чăваш пичечĕн кунĕ çывхарса пынă май çынсемпе тĕл пулса ыйтăм ирттерчĕç, халăх информаци ăçтан илнипе кăсăкланчĕç.**



**Венера АФАНАСЬЕВА, предприниматель:**

– Информаци тĕлĕшпе вокзалта кăткăслăх çук: хаçат-журнал алă айĕнчех, иртен-çўрентен те темĕн те пĕлме пулать – «сараппан» радиовĕ питĕ аван «тытать» кунта. Çапах та чăваш хаçачĕсем патне ытларах чун туртать, вĕсене мĕн пĕчĕкренех вуласа ўснĕ. «Чăваш хĕрарăмĕнче» пирĕн анне, Комсомольски районĕнчи Йăлмахвара пурăннă Ольга Дмитриева, çинчен те çырнăччĕ пĕррехинче. Вăл 10 ача ўстернĕ, пурне те вĕрентсе кăларнă, ял хуçалăхĕнче хастар ĕçленĕ. Анне çут тĕнчерен уйрăлнă хыççăн тăван кил алăкĕ çине çăра çакмарăмăр, халĕ унта пичче пурăнать. Вăл ялти шкулта хими, биологи вĕрентет. Пысăк сад тытать, таврара ун пекки никамăн та çук. Нумаях пулмасть кил-çурта юсаса çĕнетрĕмĕр. Халĕ пирĕн пата çынсем ятарласа курма килеççĕ. Сире те хăнана чĕнетĕп.

Эпĕ икĕ ĕçре вăй хуратăп, спортпа та туслă: «шпагат» ларатăп, «кĕпер» тăратăп. Виçĕ ачана пĕчченех ўстертĕм. Халĕ вĕсемпе савăнатăп, мăнаçланатăп та. Иккĕмĕш хĕрĕм – юрист, ташăпа кăсăкланать вăл, ачасене те вĕрентет.

Тĕрлĕ çĕр-шывра пурăнма тўр килчĕ мана. Хам чăваш пулнине нихăçан та пытарман. Пур çĕрте те ентешсене мухтанă, хамăр халăх ятне çĕртмен.



**Елена КИРИЛЛОВА, Шупашкар хули:**

– Эпĕ хĕллехи вăхăтра хаçат-журнал киоскĕнче ĕçлетĕп. Кунта чăвашла кăларăм çук. Çынсем «Чăваш хĕрарăмĕ» те килсе ыйтаççĕ. Вĕсем тăван чĕлхепе вуласшăн. Любовь Андреева пуçлăх çакна шута илсен чăваш хаçат-журналне хаваспах сутăп.

**Феодосия ЛАПИНА, Сĕнтĕрвăрри районĕ, Çичпўрт ялĕ:**

– Хыпарсене ытларах телекурав урлă пĕлетĕп. Чăваш хаçат-журналĕ те çырăнса илетĕп. Хулана килсен «Чăваш хĕрарăмне» киоскран туянса каятăп. 63 çулта эпĕ. Мăшăрпа иккĕнех пурăнатпăр, выльăх-чĕрлĕх нумай усратпăр. Хур-кăвакалĕ,чăххи-чĕппи те чылай. Çăкăр туянма килнĕччĕ-ха Шупашкара, пăрахăçа тухни заводра йўнĕрех, ав кутамкка епле пысăк. Пирĕн çул хакĕ тўлевсĕр те, хулана кунне темиçе те çитсе килетпĕр. Шип-шипсем валли халех типĕтсе хурасшăн, çулла пăхма хамăра ансатрах пулĕ. Пушă вăхăтра «Кунер» фольклор ушкăнне юрламаташлама çўретĕп. Хаваслă пурăнатпăр эпир, пуç усса, кулянса лармастпăр.



**Алексей СТЕПАНОВ, водитель:**

– Информаци пур çĕртен те йăтăнать халĕ: килте телевизор та пĕр чарăнми кĕрлет, компьютер умĕнчен те тăма пĕлместпĕр... Çапах та пушă вăхăт тупăнсанах алла хаçат тытатăп, ытларах вырăсла вулатăп. Манăн паян Свияжска çула тухмалла. Унта чăвашсем пурăнаççĕ-и? Çавна ыйтса пĕлмешкĕн сире пĕрле илсе каймашкăн хирĕç мар.

**Зоя УШЕЙКИНА, Хĕрлĕ Чутай районĕ, Хусанушкăнь ялĕ:**

– Эпĕ чăваш хаçат-журналĕпе питĕ туслă. Мĕн ачаран вулама юрататăп. «Чăваш хĕрарăмне» чылай çул çырăнса илетĕп. Халь Шупашкарта куçа операци тутартăм, тухтăрсен ĕçĕпе питĕ кăмăллă юлтăм. Малтан больницăна кайма хăраса тăнăччĕ. Ним шикленмелли те çук иккен. Операци ăнăçлă иртрĕ. Малашне куçлăхсăрах вулама пуçлăп.

**Валерий СТЕПАНОВ, Вăрмар поселокĕ:**

– Пушă вăхăтра телевизор пăхасси е вырăнти хаçата алла тытса ларасси йăлара. Шел, республика кăларăмĕсене çырăнса илместпĕр.



**Надежда СКВОРЦОВА, аптека заведующийĕ тата Валентина СЕМĔНОВА консультант:**

– Пирĕн пурнăçра хыпара вăхăтлă та тĕрĕс пĕлсе тăни питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Мĕнле кăна информаци çук-ши халĕ? Вĕсене пурне те пуçа чикес те килмест. Паллах, çĕр шыври улшăнусемпе çĕнĕлĕхсене официаллă çăл куçсенчен, вĕсенчен пĕри – «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат, пĕлетĕп, «сарă» пресса хыççăн каймастăп. Информаци пĕлекен тĕнче тытса тăрать теççĕ, çавăнпа та эпир те кун-çулпа тан пырас тесе тăрăшатпăр.

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Шульăк хыççăн хăваласа...

**Маргарита ИЛЬИНА**

**Ÿкессе пĕлсен тÿшек сарма ĕлĕкех хушнă чăваш. Анчах вырăнне кăтартма маннă. Халĕ вара, ахăр, çавăнтанпах пĕлместпĕр – таçта ÿкетпĕр... Тепĕр тесен, ăçта ÿкессине ăна мăн асатте-асанне кăна мар, хамăр та пĕлместпĕр-ха. Йăнăшатпăр, такăнатпăр, ÿкетпĕр, вĕчĕрхенетпĕр... Тăратпăр та... татах такăнатпăр... Ăслисем çын йăнăшĕ çинче вĕренеççĕ. Теççĕ. Пирĕн вара хамăрăннех туса пăхмалла. Чăваш вĕт-ха. Апла тăк – тытса пăхмалла...**

**Паян сăмах хускатиччен ятарласа "Вырăсла-чăвашла словаре" алла илтĕм. Унта "мошенник" сăмаха шырарăм – чăвашла мĕнле куçать-ши? "Ултавçă" тенине пĕлетĕп-ха... Анчах та вăрлас-çаратас шухăшлă çынсем ĕлĕкех пулнă, маларах вĕсене мĕнле сăмахпа питленĕ-ши чăваш? Юрĕ, Ашмарин патнех çитмĕпĕр, Скворцов словарĕнче вара "мошенник", "ултавçă" тенисĕр пуçне "шульăк" тата "хайлаçă" тени тĕл пулать. Вăт çав хайлаçăсенчен пĕрне явап тыттарас шухăшпа çитрĕм те Шупашкарти Мускав районĕнчи шалти ĕçсен пайне...**

**Ĕçлĕ çынсене чăрмантарас мар тесе маларах, чăн та, шăнман пăр çине лартма хăтланакан çав шульăка хам та шыраса пăхрăм-ха. Арçын Чапаев ячĕллĕ пĕрлешÿре грузсене çул çинче хăрушсăрлăхпа тивĕçтерес енĕпе ĕçленине, Çĕрпÿ районĕнче çуралнине пĕлме май килчĕ. Малалла вара йĕркелĕх хуралçисенченех пулăшу ыйтас терĕм. Ах, анчах, эпĕ унта ман пеккисене кĕтсе кăна тăраççĕ тесе...**

**"Эпир сире пур пĕр "откас" кăна паратпăр", – дежурнăй пайри пĕчĕк кăна чÿречерен çакăн пек илтĕнсен те тÿрех каялла çавăрăнса утма васкамарăм-ха. "Ячĕшĕн те пулин шыраса пăхмастăр-и?" – тĕлĕннипе манăн çăвар карăлнине кура хайхисем çапах та ыйту çырма сĕнчĕç. Документсене тăваттăмĕш хутах илсе хăпарса йышăнчĕç. Кайран вара дежурнăйран хут илмелле-мĕн – хăв документсене чăнах та парса хăварнине çирĕплетме. Вăт çавăнта куртăм тăк – куртăм!**

**Пирĕн те, журналистсен, тепĕр чух чей ĕçме те вăхăт çук. Анчах кунтипе танлаштарайман... Мăнтарăн дежурнăйĕ пĕр харăс çичĕ ĕç тăвать тейĕн. Пĕрин документĕсене шута илет, теприне хăй бланксем парать, çав вăхăтрах телефон шăнкăртатать, çынна илсе пыраççĕ, çырса тултарнă бланксене каялла параççĕ... Çакă пĕр чарăнми пулса иртет! Пĕр сăмахпа, документсен описĕн талонне алла иличчен хайхи пĕчĕк чÿрече патĕнче пĕр сехет те тăтăм пулĕ. Журнала пĕтĕмпе те пĕр вичĕ-тăватă предложени çырмаллаччĕ... Çав вăхăтра кăмăлсăр сутуçăпа туянакан пулăшу ыйтма пычĕç – укçа каялла сахалрах тавăрса панă-мĕн /кур-ха, хайлаçă таçта та тĕл пулать/. Пакунлă майрана хăйне пулăшу кирлĕ. Таксистăн машининче такам кĕсье телефонне манса хăварнă. Хайхискер ăна полици уйрăмне илсе пынă. Документсене алă пуса-пуса хăй те халтан кайрĕ ахăр... "Паян канмалли кун, граждансенчен никам та çук..." – пăхрĕ пирĕн куçран хайхи майра. Ара, раштав уйăхĕн вĕçĕ. Каç. Ыр çын çак вăхăтра полици уйрăмĕнче мĕн туса çÿретĕр? Çапла пĕр усал çĕтĕк телефоншăн кÿнтелен те пулса ĕлкĕртĕмĕр. Пирĕн документ çаплах хатĕр мар-ха. Татах çынсем килеççĕ, телефон çаплах кĕрлет, форма тăхăннă çынсем каллĕ-маллĕ кумаççĕ кăна. Пĕр чиперкке "бланк доставки" пырса ыйтрĕ, ăна тултарчĕ те каялла тавăрса пачĕ. "Наташа, Гузовски урамĕнче харкашу сиксе тухнă, арçын алла çĕçĕ тытнă. Кайса тĕрĕслесе кил-ха", – йышăннă хыпара пĕлтерчĕ хайхи чиперкке дежурнăй. "Санăн совеç пур-и? Манăн халĕ апат вăхăчĕ", – çÿçне пĕветнĕ сарă майра куç харшине те сиктермесĕр çурăмне кăна кăтартса хăварчĕ. "Эпĕ апат çини-çименни кама та пулин пăшăрхантарать-и тата?! Авă хĕрарăма ниепле те килне яраймастăп!!!" – дежурнăйăн чăтăм тинĕсĕ тулса тăкăнса кайрĕ курăнать, аллинчи хута та айккинелле вăркăнтарчĕ вăл...**

**Эпĕ вара хам сисмесĕрех шухăша кайрăм... Полиции шăнкăравланă хĕрарăм пулăшу, хÿтлĕх çитессе куç пек кĕтет тен... Аллине çĕçĕ тытнă арçынран ыррине кĕтмелли çук паллах. Тен, мăшăрĕн пурнăçĕ кĕç-вĕç татăлма пултарать. Хÿтлĕхпе тивĕçтерес енĕпе ĕçлекен тытăмра вăй хуракан сотрудник вара çак хыпар хыççăн лăпкăн кăна "арман авăрттарнине" куç умне кăларма та пултараймарăм... Чăн та, дежурнăй ырă сăмаха тивĕç: тарăхнине "çăтса" ячĕ те – çын пурнăçĕ темрен те хаклăрах – палăртнă адреспа кам кайма пултарнине тĕрĕслеме пикенчĕ...**

**Çак тытăмра куллен улшăну пулса иртет. Шалăва та самай хăпартса пăхрĕç, ятне те улăштарчĕç – милицирен полици туса хучĕç. Штатне те кĕскетрĕç – халĕ çав тытăма лекмешкĕн ай-яй! йывăррине калаççĕ. Çапах та чиперуксем те чиперех ĕçлеççĕ авă унта. Чăн та, сывлăхĕсене перекетлеме пĕлеççĕ вара. Хăйсенне... Ытти енĕпе лару-тăру ырă енне хăçан та пулин улшăнĕ-ши? Çакă кăна иккĕлентерет. Иккĕленмешкĕн сăлтавĕ те сахал мар. Калăпăр, штата кĕскетни преступноçа чакарма хăш енчен пулăшать-ши? Участок уполномоченнăйĕсенчен çуррине кăна хăварнă. Халăхпа чи сывăх ĕçлекеннисем шăпах вĕсем-çке. Пурнăç усалланса пынăçемĕн çын кăмăлĕ те хаярланать. Ку вара шăпах киревсĕр ĕç тума хистет те. Çакăн пек саманара йĕркелĕх хуралçисен йышне чакарнине ниĕмпе те ăнлантарма çук паллах. Çав вăхăтрах кун йĕркине çирĕп пăхăнса апата вăхăтра çÿрекен сотрудниксем пирки те лайăх сăмах çырăнмасть темшĕн...**

**Ĕç мĕнпе вĕçленни те кăсăклантарать пулĕ вулакана. Çĕнĕ çула кĕрес мар тесе шăп уяв умĕн çырнăччĕ ыйтăва. "Пирĕншĕн каникул çук, вунă кунран хурав кĕтĕр", – ăсатрĕ пире пуçлăхсенчен пĕри. Унтанпа... икĕ эрне çурă иртрĕ. Ыйткаласа пĕлнинчен çакă паллă пулчĕ – пирĕн хутсене Ленин районĕнчи шалти ĕçсен пайне çитернĕ. Пире вара кун пирки хыпарлакан пулмарĕ-ха. Кĕтетпĕр. Эпир шăпах ыйту çырса ларнă пÿлĕме ЧР ШĔМ министрĕн çумĕсенчен пĕрин тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ пырса кĕнĕччĕ. Мĕн çăмăлпа çÿренине пĕлсен: "Ай, лайăх мар çын", – хута кĕчĕ хайхискер. Вăт çак лайăх мар çынна лайăх çынсем çапах та тупса явап тыттарасса шанас килет те çав...**

ÇĔНĔЛĔХ

# Маршруткăра та УЭКпа тÿлеме май пур

Республикăри маршруткăсенче çул çÿревçĕн универсал электрон /УЭК/ та, транспорт карттисемпе те тÿлеме пулать. Ку çĕнĕлĕх пĕлтĕрхи раштав уйăхĕнчен вăя кĕчĕ. Терминала Çĕнĕ Шупашкарти 14, 20-мĕш маршрут ГАЗелĕсенче тата хуласен хушшинчи 626, 265.1, 511э, 555, 112, 536-мĕш микроавтобуссенче вырнаçтарнă.

УЭКпа е транспорт карттипе тÿлесси питĕ ансат – ăна терминал çумне лектерсенех вăл чек кăларать, унта çул çÿрев хакĕ, вăхăт, кун, маршрут номерĕ кăтартнă, карточкăра мĕн чухлĕ укçа юлни те паллă.

Аса илтеретпĕр, 2013 çулхи ака уйăхĕнчен Чăваш Енре УЭКăн транспорт хушăмĕ вăя кĕчĕ. Халăха çакăн евĕр тÿлеве хăнăхтарас тĕллевпе унччен транспорт картти – электрон енчĕк – хута кайнăччĕ. УЭКпа троллейбусра, автобусра, хуласен хушшинчи рейсра усă курма май пур. Палăртмалла, общество транспортĕнче унпа усă курсан çул хакĕ 1 тенкĕ йÿнĕрех.

Кунсăр пуçне республикăра УЭКăн федерацин икĕ хушăмĕ – идентификаци /СНИЛСпа ОМС/ тата банк – ĕçлет. Кăмăл пур тăк карточкăна электрон цифра алă пуснине те кĕртме юрать, унпа Патшалăх пулăшăвĕн пĕрлехи порталĕнчи пулăшупа усă курма, документа алă пусма май пур.

Хальлĕхе УЭК илме пурĕ Чăваш Енри 14,3 пин çын ыйту çырнă, 2,8 пинĕшĕ çĕнĕлĕхпе усă курать.

**Лиана ВАНИНА.**

ЙĔЛТĔР ЙĔРĔ

# Чăваш Ен хĕллехи спорт уявне хатĕрленет



Раççейĕпех спортăн чи масăллă иртекен уявĕсенчен пĕри – «Йĕлтĕр йĕрĕ-2014» – çывхарать. Кăçал вăл Чăваш Енре нарăсăн 2-мĕшĕнче иртĕ. Йăлана кĕнĕ пекех, республикăри кашни хулапа районта та сывă пурнăç йĕркине пăхăнакан çынсем, спортпа туслисем хутшăнĕç унта. Тĕп старт «Шупашкар: 500 çул» культурăпа кану паркĕнче 12 сехетре пулĕ.

«Йĕлтĕр йĕрĕ» пирĕн çĕр-шывра 1982 çултанпа иртет. Кăçал спортăн чи анлă уявне Раççейĕн 71 регионĕ хутшăнма хатĕррине пĕлтернĕ.

**Анна ГЕРАСИМОВА.**

КУРАВ

# Куç курманнисен тĕнчи

Наци библиотекинче «Брайльпе пĕрле тĕнче уçатпăр» курав уçăлнă. Ăна куç курманнисен рельефпа пăнчă шрифтне шухăшласа тупнă Луи Брайль çуралнăранпа 205 çул çитнине халалланă. Унта хăйне уйрăм вĕренÿ программи вăй илни çинчен пĕлме пулать. Куççăр ачасен тата аслисен букварьне кăтартнă. Рельефпа пăнчă шрифчĕпе çырмалли блокнотпа тетрадь те куравпа паллашакансен куçĕ тĕлне пулĕ.

Луи Брайль яланах ыррине шаннă. Унăн пурнăçĕнчи пĕр саманта аса илтерес килет. Паллă çав çыннăн килĕнче пĕчĕк арча упраннă. Çавăнта çынсем унран кивçен укçа илнине çирĕплетекен хутсем пуçтарăнса кайнă. Пурнăçран уйрăлсанах çав документсене çунтарма хушса хăварнă вăл...

Курав çак уйăх вĕçĕччĕнех ĕçлĕ.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

АЙĂПЛАВ

# Алимент тÿлемесен

Кун-çул кăтартнă ачине ашшĕ-амăшĕн пăхмаллах. РФ Çемье кодексĕнче те çакна палăртса хăварнă. Анчах та çемье арканнă хыççăн саккун тата тĕпренчĕкĕсен умĕнчи тивĕçне манакан, шел те, чылай. Сĕнтĕрвăрри район прокуратури явапсăр ашшĕнчен алимент шыраса суда тавăç тăратрĕ. Çул çитмен вичĕ ачи умĕнчи парăм 700 пинрен те иртсе кайнă арçыннăн. Нумаях пулмасть ĕçе миравай судья пăхса тухрĕ, асăннă укçана шыраса илме йышăнчĕ.

Тĕрĕслев çакна кăтартса пачĕ – арçын 2012 çулхи нарăс уйăхĕнчен вара алимент тÿлемен, вăл унччен çемйине 300 пине яхăн парăма кĕнĕ. Çавна пулах пени капашсăр ÿссе кайнă та. Кунсăр пуçне прокурор йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн явапсăр ашшĕ тĕлĕшпе адмĕç пуçарнă.

**А.КАЮКОВ,**
**Сĕнтĕрвăрри район прокурорĕн аслă пулăшуçи.**

ĔÇСĔРЛĔХ

# Çамрăк амăшĕсене вĕрентеççĕ

Раççей Правительстви пĕр е ытларах ачаллă 23 çул тултарман амăшĕсене аслă шкулта хушма пĕлÿ парас тĕлĕшпе эксперимент ирттерет. Чăваш Республики те пилот регионсен йышне кĕнĕ. Çак ĕçе 50 субъектри 51 аслă шкул хутшăнать. Пирĕн тăрăхра çамрăк амăшĕсен И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче ППЭ хатĕрленме май пур. Хальлĕхе 21 амăшĕ пĕлĕве тарăнлатма кăмăл тунă. Малашне вĕсем аслă шкула вĕренме кĕресси, дипломлă специалист пуласса шанас килет.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

# Нумай ачаллă çемьесене патшалăх пулăшăвĕпе усă курма мĕн чăрмантарать?

**Сăмах вăйĕ виçесĕр... Сăмахпа вĕлерме те, çÿл тÿпене çĕклеме те пулать. Эпир те хамăрăн инструментпа – СĂМАХПА – асăрханса усă курма тăрăшатпăр. Чăн та, çитменлĕхсене питленĕ чух пирĕн калем çивĕчрех те пуль, ырă тĕслĕх пирки çырнă чух вара кăмăла ирĕке яратпăр.**

**Чăваш пичечĕн кунĕ умĕн шухăша кайрăмăр: эпир çырнинчен, çивĕч ыйтăва хускатнинчен мĕнле витĕм пур? Вулакана информаципе тивĕçтернисĕр пуçне урăх мĕнпе пулăшма пултарать хаçат?**

**«Сăмах вăйĕ...» Çапла ят панă çĕнĕ рубрика пуçарнă май «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат пулăшнипе çуртлă пулнă Элĕк районĕнчи Чăваш Сурăмĕнче пурăнакан нумай ачаллă Арсентьевсем патне çула тухрăмăр.**

## Пулăшу ыйтса – редакцие

5 ача амăшне, Элĕк районĕнчи Чăваш Сурăмри Марина Арсентьевăна редакцие çурт-йĕр нуши илсе çитернĕччĕ. Çемье пĕчĕк те /38,9 тăваткал метр/ кивĕ çутра пурăннă, унăн 67% юрăхсăра тухнă. 2009 çулта Арсентьевсем çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатас тĕллĕшпе федераци «Çурт-йĕр хутшăнăвĕсене йĕркелесси çинчен» саккунĕпе килĕшÿллĕн ял тăрăх администрацине черете тăнă. 2011 çулта вырăнти бюджета Арсентьевсене çурт-йĕрпе тивĕçтерме укçа куçнă. Анчах Чăваш Сурăмĕнче пÿрт çĕклемешкĕн ирĕклĕ лаптăк çуккине кура пуçлăхсем тĕрлĕ мел сĕннĕ: 67 тăваткал метрлă çурта куçма та, Арсентьевсен хăйсен çĕрне вырăнти ял тăрăхне пама, унтан çĕннине хăпартма... Сĕнÿсем тивĕçтерменнипе хĕрарăм журналистсенчен пулăшу ыйтнăччĕ те. Вера Эверкки корреспондент çийĕнчех Элĕке çула тухрĕ ун чух. Вăл район администраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Александр Куликовпа тата явапла ытти çынпа курнăçрĕ. Çавăн хыççăн тин лав хускалчĕ темелле. Çĕньялти /Чăваш Сурăмĕнчен 1 çухрăмра вырнаçнă. – **Авт./** Емельяновсем хăйсен пушă выртакан çĕрне ял тăрăх администрацине сутма килĕшнĕ. Çапла майпа чÿк уйăхĕнче унта Арсентьевсене валли çурт çĕклеме тытăннă. Унăн уççине çав çулах раштавра хуçисене тыттарнă. Кĕске вăхăтрах 91,9 тăваткал метрлă çурта пур хăтлăлăхпа та тивĕçтернĕ, газ кĕртнĕ, пластик чÿречепе çĕнĕ йышши алăк лартнă, стенасене илемлĕ обой çыпăçтарнă... Канфет пек теççĕ-и-ха? Çавнашкалах пулса тухнă. Çурт тума 2,5 миллиона яхăн тăкакланă. Чăн та, Арсентьевсене саккунпа килĕшÿллĕн 126 тăваткал метрлă пÿртпе тивĕçтерме шантарнăччĕ. Тĕлĕнмелле, 30 ытла тăваткал метр ăçта çухалнă-ши? Çĕнĕ çуртшăн хĕпĕртенĕ кил хуçисем çакна тĕппех çÿремен паллах. Эпир вара Çурт-йĕр кодексне шĕкĕлчеме ÿркенмерĕмĕр, унăн 38-мĕш статйинче: «Стандартăн социаллă норми виçĕ е ытларах çынран тăракан çемьери пĕр çын пуçне 18 тăваткал метр тивĕçмелле», – тесе çырнă.



## Шурă пÿрте... кукка мар, патшалăх туса панă

Халĕ мĕнле пурăнать-ха нумай ачаллă çемье? «Ял хĕрринчи пĕрремĕш çурт – вĕсен, симĕс черепицăпа витнĕскер», – ăнлантарчĕç Чăваш Сурăм ял администраци ĕçченĕсем. Марина Ивановна кĕçĕннипе, тăваттăри Арсенипе, килте ларать. Капмар та хăтлă çуртра арçын ачана велосипедпа ĕрĕхсе чупмалăх та вырăн пур, ахальтен мар хурçă тусне алăран вĕçертмест Арсений. Хальлĕхе килçурта сĕтел-пукан таврашне лартса çитереймен-ха, карта тытса çавăрма, хуралтă, сарай çĕклеме те пайтах вăй кирлĕ. Çавăнпах çемье 3 ĕне, 2 тына, ытти выльăх-чĕрлĕх хĕл каçарать, вĕсене Чăваш Сурăмĕнче усраççĕ. Ирхи пилĕк сехет çурăра сĕт пуçтарма килеççĕ-мĕн, унччен ĕне сума ĕлкĕрет кил ăшшин управçи. Вырăнти хуçалăх халĕ литршăн 21 тенкĕ тÿлет. Кăнтăрла та, каçпа та выльăх пăхма васкаççĕ арăмĕпе упăшки. Вĕсене ачисем те, 9-мĕш класа каякан Иринăпа 7-мĕшне çÿрекен Павел, пулăшаççĕ. Асли Галина Шупашкарта вĕренет.

«Çурт уççине алла илнĕ кунах çĕр каçма юлтăмăр эпир. Ачасем те: «Ниçта та каймастпăр, кунтах çывăратпăр», – терĕç. Пурте савăнчĕç, çакăн пек хăтлă çурт пирĕн пулнине ĕненес те килмерĕ: туалет та пÿртрех, ваннăй та пур. Кун пирки ĕмĕтленнĕ кăна эпир. Чăваш Сурăмĕнчен матрас илсе килтĕмĕр те урайĕнчех çĕр каçрăмăр. Хĕрĕм хăйĕн çуралнă кунне çĕнĕ çуртра паллă тума хăна пухасси пирки сăмах тапратрĕ. Йăла-йĕркене пăхăнса малтан çĕнĕ пÿрт ĕçки ирттерме палăртрăмăр», – аса илчĕ Марина Арсентьева. Унта «Чăваш хĕрарăмĕн» ĕçченĕсене те чĕннĕччĕ вăл, çурт-йĕрлĕ пулма пулăшнăшăн тав тăвасшăнччĕ, анчах ун чухне çав кĕрекере чаплă хăнасен йышĕнче ларма май килмерĕ.



## Журналист тĕрĕс-и е пуçлăх-и?

2011 çулта редакцие пынă чухне Марина Ивановна нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕ уйăрассипе те кăсăкланнăччĕ. Ун чухне çĕнĕ саккун вăя кĕнĕччĕ кăна-ха, унпа усă курса Арсентьевсем те çĕр илме шухăшланăччĕ. Анчах ял тăрăх администрацийĕн ĕçченĕсем хĕрарăма тĕрĕс мар информаци панă: «Аслă ачи 18 çул тултарсан çурт-йĕр условине лайăхлатма черетре тăракансене е пĕр ачи 2011 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ хыççăн çуралнисене çеç параççĕ», – тенĕ. Вырăнти тÿре-шара саккуна хăйсем те тĕплĕн ăнланса çитеймен, çынсене те арпаштарнă. Черете камсене тăратасси пирки вăл вăхăтра «Чăваш хĕрарăмĕн» корреспондентĕнче ĕçленĕ Вера Эверкки Александр Куликовпа тавлашса та илнĕччĕ. Хаçатçăсене шанманнине кура пуçлăхпа пĕрле саккуна та шĕкĕлчеме тивнĕ вĕт... «Чăваш Республикинче нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕпе тивĕçтересси çинчен» калакан саккунĕн 3-мĕш статйи, ăна ЧР Патшалăх Канашĕ 2011 çулхи пушăн 22-мĕшĕнче йышăннă, иккĕленĕве усăмлатма пулăшнă та.

– Çĕр лаптăкне илме май килчĕ-и? – кăсăклантăм эпĕ.

– «Çĕр тивĕçмест» тесе ăнлантарнă хыççăн урăх йăлăнса çÿремен, ыйтма та аван мар пек... Патшалăх пÿрт лартса панăшăн та ăмсанакансем тупăнчĕç. Çурта харпăрлăха куçартăмăр-ха, анчах 15 сотка çĕрĕн документне халĕ те алла илеймен. Ял тăрăх администраци пуçлăхĕ каланă тăрăх – сутни-илни çинчен калакан килĕшĕве мĕнле йĕркелемеллине районтисем пĕлмеççĕ, – ăнлантарчĕ Марина Арсентьева.

Вырăнти пуçлăхсемпе вĕçне-хĕрне тухса пĕтме май çуккине тĕпе хурса ЧР Пурлăх министерствипе çыхăнтăм, çĕр хутшăнăвĕсен енĕпе патшалăх политикине пурнăçа кĕртессипе ĕçлекен уйрăм ертÿçи Ирина Модина çапла ăнлантарчĕ: «Арсентьевсен, çурт лартса панине пăхмасăр, çĕр лаптăкĕ илме ирĕк пур, вĕсем унпа хушма хуçалăхра усă курма е дача çĕклеме пултараççĕ». **2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне /саккун вăя кĕнĕренпе/ республикăра пурĕ 1822 нумай ачаллă çемьене çĕр лаптăкĕ тивĕçни çинчен калакан сертификат панă, вăл шутра Элĕк районĕнче пурĕ 8 çемье çеç патшалăхăн асăннă пулăшăвĕпе усă курнă. Республикипе танлаштарсан, ку – чи пĕчĕк кăтарту.** Вырăнти халăха тÿре-шара ура хунипе çыхăнман-ши çакă? Иккĕленÿ ахальтен çуралмарĕ. Элĕк питĕ аякри вырнаçнă район мар-çке. Унта 17200-е яхăн çын пурăнать. Танлаштарма, Пăрачкав тăрăхĕнче нумай ачаллă 19 çемье ятарлă программăпа килĕшÿллĕн çĕр лаптăкĕ илнĕ, районта 14 пине яхăн çын пурăнни пирки палăртаççĕ.

## Тÿлевсĕрех апатланать-и?

Нумай ачаллă амăшĕпе калаçнă май сăмах шкул апатланăвĕ çине куçрĕ. «Уйăхне вăтамран 500-е яхăн тенкĕ тÿлемелле. 1-мĕш класа каякан Арина кăна шкулта апатланать, кĕркунне 600-шер тенкĕ парса тăтăм, раштавра – 450. Виççĕшне харăсах укçа пама вăй çитерейместĕп. Вĕренÿ çулĕн пуçламăшĕнче сахал тупăшли пирки калакан справка тăратнăччĕ, анчах ачасем тÿлевсĕр апатланман. Аслисем пысăк тăхтав вăхăтĕнче Чăваш Сурăмĕнчи пÿрте кĕрсе çикелеççĕ, унта газ сÿнтермен, çурт шкулпа юнашарах», – пĕлтерет Марина Ивановна. «Нумай ачаллисемпе сахал тупăшлисем пулни шкулти апатлану енĕпе çăмăллăхсем пур-и?» – çак ыйтупа Чăваш Сурăм шкул директорне Лариса Гордеевăна чăрмантартăм. Вăл малтанах Арсентьевсен Арини тÿлевсĕр çини пирки тупăшма пăхрĕ, амăшĕ укçа парса янине çирĕплетсен: «Раштавăн юлашки эрнинчен пуçласа», – тесе тÿрлетрĕ. Тĕлĕнмелле те, амăшне кун пирки никам та пĕлтермен.

– Пирĕн шкулта ăнăçсăр, нумай ачаллă, сахал тупăшлă çемьесенчи 5 ача тÿлевсĕрех апатланать, вĕсене валли «Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе» ыр кăмăллăх фончĕ пухнă укçаран пурĕ 9370 тенкĕ уйăрнă. Камсене çитерессине ятарлă комисси татса панă, – пĕлтерчĕ Лариса Михайловна.

«Шкулти апатланăва муниципалитетсем хăйсемех йĕркелеççĕ, республика бюджечĕ ятарласа кун валли укçа уйăрмасть», – хуравларĕç ЧР Вĕренÿ министерствинчен çакăн пирки кăсăкланнă май. Элĕк районĕнче шкул ачисен тÿлевсĕр апатланăвне кăçалтан вара район администрацийĕн вĕренÿ, социаллă аталану, çамрăксен политики тата спорт уйрăмĕн опекăпа попечительство органĕ йĕрлесе пырать.

**Алина ИЗМАН.**

**ЮЛАШКИНЧЕН КАЛАНИ. 2011 çулхи çурла уйăхĕн 6-мĕшĕнче «Чăваш хĕрарăмĕнче» «Кушаккине – патакки, е Арсентьевсем çĕнĕ пÿрте куçĕç-и?» статья тухсанах республика прокуратури тĕрĕслев пуçарнă. Çакăн хыççăн вырăнти пуçлăхсен хăйсен тивĕçĕсене мĕншĕн йĕркеллĕ пурнăçласа пыманнине ăнлантарса çырма тивнĕ. «Хут чăтать» теме хăнăхнă та, анчах унăн витĕмĕн вăйне палăртмаллах. Икĕ /!/ уйăхра çурт хута яни çакна çирĕплетет те.**

**Вырăнти хăй тытăмлăх ертÿçисем нумай ачаллă çемьесемпе çыхăннă ытти ыйтăва та – саккунпа килĕшÿллĕн – çивĕч калемпе лектерыччен татса парасса шанас килет.**




ЖУРНАЛИСТ КУÇĔПЕ

# Тӳре умĕнче тӳрре тухайăн-и?

Иртнĕ вырсарни кун Кӳкеç çывăхĕнчи юманлăха йĕлтĕрпе ярăнма каймашкăн палăртрăмăр. Калаçса татăлнă пекех кăнтăрла иртни икĕ сехет тĕлĕнче «Улăп» физкультурăпа сывлăх комплексĕ умне çитсе те тăтăмăр. Çанталăк тӳлек, шăмат кун кăна кунĕпе юр çурĕ. Икĕ тусăм йĕлтĕрне тӳрех сырса тухнă, эпир, тепĕр юлташăмпа, кассăна черете тăтăмăр: ФСК йĕлтĕр те, коньки те тара парать. Йĕлтĕршĕн 50-шар тенкĕ тӳлерĕмĕр, анчах коньки памаççĕ-мĕн – каток хатĕр мар. Пĕчĕк хĕрĕмсем тутисене тăсрĕç... Йĕлтĕр панă çĕре çитрĕмĕр. Ак тамаша, алăкне питĕрнĕ. Шаккасан та уçмарĕç. Нимĕн ăнланмасăр кассир патне таврăнтăмăр. «Ĕçлемеллеччĕ-çке, халех шăнкăравласа пĕлетĕп», – пире пулăшма шантарнăн телефон кĕпçине ярса илчĕ хĕрарăм. Кĕçех... паян йĕлтĕр проката памании уçăмланчĕ. Ачамсен кăна мар, хамăн та кăмăлăм хуçăлчĕ.

Шупашкарти шкулта ĕçлекен тусăм хăйĕн вĕрентекенĕсемпе тĕл пулчĕ. Çамрăксем те йĕлтĕрпе ярăнас тĕллевпе ятарласа хуларан килнĕ иккен, анчах вĕсем те çак хатĕре прокатран илеймен.

Икĕ юлташ вăрман тавра çаврăнать кăна, вĕсем хыççăн çил шăхăрса пырать, ман пекех йĕлтĕрсĕр тусăм шăнса пăсăласран хăраса килнелле уттарчĕ. Эпир ачасемпе ФСК таврашĕнчех уçăлса çӳрерĕмĕр, малтан тăвайккинчен ярăнтăмăр, кайран каток çине кайрăмăр – пĕр мăшăр коньки çумрахчĕ те. Хоккей вылямалли лаптăка тасатаççĕ: пĕри – сарлака кĕреçепе, тепри ятарлă техникăпа юра вĕçтерет кăна. Каток пăрпа йăлтăртатать, юр хырмалли чылай та юлманччĕ. Пĕчĕк ачасене ярăнма вырăн нумай кирлĕ-и? Хĕл ăшă килнипе каток тума май килмерĕ кăçал, çапах та пĕр вăхăт ачасем хоккей курупкипе усă курчĕç, анчах пăр пăсăлнипе унта та кĕртме пăрахрĕç. Вырсарни кун юр ирĕлсе тăмасттĕ, апла тăк конькипе ярăнма та чухах.

Пирĕн хыççăн ачаллă хĕрарăмсем утрĕç, вĕсем те тĕпренчĕкĕсене хĕл ырлăхĕпе савăнтарасшăн. «Кĕме ирĕк парĕç-ши?» – иккĕлене-иккĕленех ачасене коньки тăхăнтартрăмăр. Агрегатпа юр хыракан пирĕн пата çитсе те тăчĕ. Вăл сăмах чĕнмесĕр хĕрарăмсем «тапăнчĕç»: «Халĕ Раççейĕпех спортпа сывлăх вунă кунлăхĕ пырать!» Арçын тавлашса тăмарĕ: «10 минут ярăнма ирĕк паратăп. Анчах та пăра пăссан, ас тăвăр... Ачăрсем ярăннă хушăра амăшĕсем юр тасатаççĕ», – терĕ вăл кулакулах. Эпĕ, йĕлтĕрпе ярăнас йӳтĕмпе çӳхе курткăпа тухнăскер, турткалашса тăмасăрах кĕреçе ярса илтĕм. «Юр хырни те – физкультура, шăнса тăни мар», – текелесе ĕçе пикентĕм. Ачисемпе килнĕ тепĕр икĕ хĕрарăм çинçе пилĕкĕсене авас темерĕç, вĕсене кĕрĕкпе ахаль те сивĕ мар. «Пĕтерейместĕр-и? Каç пулать кĕçех...» – сăмах чĕнтĕм сарлака кĕреçепе юр хыракан арçынна. «Малтан администраци çурчĕ тавра тасатрăм, кăнтăрлахи апат та çимен, ларса та канман... Эсĕ тарăхтарса тăратăн тата!» – сасă хăпартасшăнччĕ вăл. «Ун пирки мар-ха эпĕ, лаптăкĕ пысăк, пĕччен хырса пĕтерме майĕ те çук, ыттисем мĕншĕн тухмаççĕ?» – кăмăлне çаврăма тăрăшрăм эпĕ. «Дежурство пĕтнĕ те кайнă вĕсем», – хуравларĕ арçын. Çĕрĕпе юр çунă май ăна çавнашкал шăпа лекнĕ иккен...

Пĕчĕккисем ярăнса та ывăнчĕç кĕçех, эпĕ те кĕреçене хутăм. Пирĕн хыççăн ывăлĕпе килнĕ çамрăк ашшĕ юр тасатма тухрĕ... Капла тĕттĕмленнĕ тĕле хоккей курупкине йăлтах тасатса пĕтерме пулатех.

Тунти кун ирпе «Улăп» администрацийĕпе çыхăнтăмăр, мĕншĕн вунă кунлăх вăхăтĕнче те йĕлтĕр илме май çукши? Çак ыйтупа кăсăклантăмăр. Ертӳçе тытайманнипе хамăр редакци номерне хăвартăмăр, каярахпа пирĕнпе çыхăнма ыйтрăмăр. Кĕçех пуçлăх çумĕ шăнкăравларĕ, вырсарни кун прокат ĕçлеменнине вăл пирĕнтен пĕрремĕш хут пĕлнĕ иккен, ыйтăван вĕçне-хĕрне тухма шантарчĕ те... çухалчĕ. Тепĕр кун хам командировкăна кайнăччĕ. Тен, çавăн чухне шăнкăравланă вăл? Пĕлместĕп. Юн кун Кӳкеçпе тепĕр хут çыхăнтăмăр. Хальхинче ФСК пуçлăхĕн вĕренӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕпе Надежда Николаевнăпа калаçрăмăр. «Вырсарни кун йĕлтĕр панă-çке», – çине тăчĕ вăл. «3 кӳнтелен пур манăн. Сăмах май, вĕсем те редакцисенче ĕçлеççĕ», – тесен кăна ыйтăва хуравлама шантарчĕ. Пĕччен пулас тăк ним мар ухмаха тăратса хăвараççĕ вĕт...

Пуçлăх çумĕ хальхинче чылай кĕттермерĕ, хăех шăнкăравларĕ, ирпе халăх пулманнипе прокат паракан ĕçчен йĕлтĕр çулне уçма кайнă имĕш, вырăнта ларман. «Эпир курмарăмăр-çке», – кирлĕ çынна сăнран палланăран кăсăкланма пăрахмарăм эпĕ. «Вĕсем пасар патĕнче ярăннă ахăртнех», – ăнлантарчĕ Надежда Николаевна. Эпир унта та пулнăччĕ-ха, вăрман тăршшĕпех васкамасăр кайăксене çитерсе утрăмăр. Анчах тӳре умĕнче тӳрре тухса пĕтейĕн-и вара? Канмалли кун та алăкне халăхшăн яри! уçман ФСК пуçлăхсене шалу илсе тăма кăна кирлĕ-ши вара? Вăт сана «Спортпа туслă Чăваш Ен»...



**Алина ИЗМАН.**

ЙĂЛА-ЙĔРКЕ

# Чуна сиплет раштав çути

Персе çитрĕ
Сурхури!
Атьăр, тухăр, ачасем!
Урам тăрăх кайăпăр,
Килтен киле çӳрĕпĕр,
Салат-хăмла пухăпăр,
Сурхури ĕçки
тăвăпăр.



Ĕлĕк-авалхи чăваш ялне таврăнас пулсассăн хĕллехи чи паллă уявсенчен пĕринче – Сурхурире – çакăн евĕр сăвă-такмака илтме тӳр килетчех. Халĕ вăл кăрлачăн 7-19-мĕшĕччен пырать. Николай Ашмарин тĕпчевĕ çырса хăварнă тăрăх – ăна Микулай кунĕ иртсен виççĕмĕш эрне кун уявланă. Вăл вырăссен Раштавĕпе пĕр килнĕ. Кивĕ стильпе Сурхурие раштавăн 25-мĕшĕнче, кун тавраннă вăхăтра, хĕвеле хисеплесе, вылăх-чĕрлĕх ĕрчевне палăртса ирттернĕ. Çĕр çынни лайăх тыр-пул туса илме, ырлăх-сывлăхлă, телейлĕ, тулăх пурăнма ĕмĕтленнĕ. Ял çыннишĕн çакă халĕ те питĕ пĕлтерĕшлĕ-ха, анчах йăх-несĕлĕмĕрĕн йăла-йĕрки манăçа тухнăпа пĕрех, хутран-ситрен ăна сцена çинче кăна курса савăнатпăр.

Сурхурие ытларах ача-пăча, яшкĕрĕмпе хĕр упраç хутшăннă, вĕсем такмакласа килĕрен çӳренĕ, ĕçмеçиме, кĕрпе-çăнăх пуçтарнă, пурне те уяв ирттерме палăртнă киле кайса панă. Ялта кашни пӳртре пăрçа шӳтерсе ăшаланă. Ватă çын пурăнакан килçуртра халĕ те пăрçа кукли, йăва пĕçереççĕ-ха. Анне, сăмахран, Сурхурире мăйăр е хĕвел çаврăнăш вăрри шĕкĕлчевнине аса илсе асăннă кучченеçе маларах туянса хурассине йăлана кĕртнĕ. Каç пулттипе яшар качча́сем купăс янраттарса, чиперккесем пурçăн тутăрне ялкăштарса улаха пухăннă. Ташласа юрланă хыççăн юмăç яма тапратнă. Пулас шăпана пĕлес тесе ăçта кăна пăхман-ши: пӳртре, картара, мунчара, анкартинче, ялта, пусă çывăхĕнче, уйра, çул тăваткалĕнче... Эпир те тĕттĕм картана кĕрсе, улах çамрăкĕсем евĕр, ача чухне сурăх ури тытаттăмăр, кашта çинче ларакан чăхсене пăлхататтăмăр, хапха урлă пушмак ывăтаттăмăр... Ĕмĕтленни пурнăçланнă-ши? Çакă халĕ аса та килмест, кулăшла туйăнать çеç. Сас-чӳпе те юмăç пăхнă ĕлĕк. Çул тăваткалне иккĕн çитсен пĕри кĕрĕк арки çине юр вăркăштарнă, тепри çав вăхăтра çĕр çине вырса итленĕ: шăнкăрав сасси – туя, чан сасси – вилĕме, чăпăркка янăравĕ кĕтӳç арăмĕ пуласса систернĕ. Никам çӳремен çĕрте юр çине месерле ӳкмелле, ирхине килсе пăхмалла. Ӳкнĕ вырăнти улăм пĕрчи – телее, йытă-кушак йĕрĕ вилĕме палăртать-мĕн...

Тепĕр кун çветке ирттернĕ. Мыскараллă тăхăннă çынсем килĕрен киле çӳренĕ, кӳршĕ ялсене те çитнĕ. Ют çын кантăкĕсем патне пырса пӳртрисем мĕн сăмахланине итленĕ, пулас мăшăрĕн ятне ыйтнă. Кăмăла кайман калаçу – начар çемьеллĕ пурнăçа, ырри – лайăха, пуянлăх пирки сăмахлани тăнăçлăха пĕлтернĕ. Çав кунсенче ларма, улахсем пуçланнă.

Çветке чупас йăла ялсенче халĕ те пĕтмен-ха. Ăна культура çуртĕнче ĕçлекенсем тытса пыма тăрăшаççĕ. «Эккемейле тумланса ялти клубсене пырса кĕретпĕр. Халăха унта мĕнпе савăнтарнине тĕрĕслеме ятарласа çула тухатпăр», – систернĕччĕ пĕлтĕр Элĕкри культурăпа кану центрĕн методисчĕ Любовь Константинова. Вăрнар районĕнчи Уйкас Кипек клуб директорĕ Лидия Михайлова та ача-пăчапа пĕрле çветке чупни çинчен каласа панăччĕ.

Раштав – сăвапллă та юратнă уявсенчен пĕри. Иисус Христос çут тĕнчене килнине чысласа ăна тĕнчипех паллă тăваççĕ, вăл шутра пирĕн республикăра та чылай мероприяти йĕркелеççĕ. Тĕслĕхрен, Шупашкар-Чăваш Ен епархийĕн митрополичĕ Варнава пил панипе «Раштав çăлтăрĕ» фестиваль 12-мĕш хут иртнĕ. Чăваш патшалăх культурăпа искусство институтне вырсарни шкулĕсен пултарулăх ушкăнĕсем пуçтараннă. Унта тĕрлĕ район коллективĕсем тĕн юррисемпе сăввисене янăратнă. Ачасене пылак кучченеçпе, Тав хучĕпе хавхалантарнă. Ыр кăмăллăх акцине хутшăнакансем тăтăшах республикăри тĕрлĕ сыватмăша, хосписа, ветерансен, ача-пăча çурчĕсене çитеççĕ, унта пурăнакансен пурнăçне илемлетме тĕрлĕ кăтарту хатĕрлеççĕ, чун ăшшине пайлаççĕ.

Кăрлач – уявран пуян уйăх. Кăшарни те çитрĕ акă. Çулталăкăн пĕрремĕш уйăхне мăн кăрлач, раштав, сурхури, хĕл /кăш/ уйăхĕ тесе каланă мăн асаттесемпе асаннесем. «Кăрлач» ырăусал, уйăх хуçи, пуçлăхĕ тенине пĕлтерет, вăлах хĕле, сивве тытса тăраканĕ, çут çанталăка хăратаканĕ-мĕн. Çĕрешыва шурă юрпа витет, сивĕ ярать, асар-писер çил вĕçтерет, пăрлă кĕпер хурса çуна валли çул хывать, вĕçен кайăка шăнтать. Анчах хальлĕхе çакăн пек калани тӳрре тухмарĕ-ха. Гидрометцентр ĕçченĕсем Раштав эрнинчи сывлăш температури нормăран 10-15 градус ăшă тăнине çирĕплетеççĕ. Юлашки хутчен çакăн евĕр çанталăк 2007 çулта тăнă. Çапах та Кăшарни тĕлне ăшă сивĕпе ылмашăнчĕ. Апла тăк хĕл сиввине тытакана – хĕл карчăкне – хисеплесе те асăнса хурчăх пусса ăшалама та, çамрăксен «хĕр сăри», «йĕтес кукли» ĕçкисене ларма та ĕлкĕрĕпĕр-ха. Çавăн пекех картиш туррине – «ыррине, сыхчине» – асăнса пăтă пăрахнă хыççăн сысна пусса хĕлле çиме какай хатĕрлеме те шăпах вăхăт.

**Алина ТИМОФЕЕВА.**



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Куккурус катлечĕ



**500 грамм авăртнă какай валли çур батон, 1 çăмарта, çур банка консервланă куккурус, 2 апат кашăкĕ манна кĕрпи, ăшаламашкăн тип çу, тăвар, пăрăç тата тутă кĕртекен çимĕçсем кирлĕ.**

Пÿлĕм температуринчи шывра батона 3-4 минут ислетмелле, кайран шывне сăрăхтармалла. Сухана шуратса вĕттĕн турамалла, хĕрлĕ тĕслĕ пуличчен тип çупа ăшаламалла. Авăртнă какая, çăмартана, батона тата сухана хутăштарса пăтратмалла, куккурус хушнă хыççăн тăвар, тутă кĕртекен çимĕçсем, пăрăç сапмалла. Лайăх пăтратнă хыççăн катлетсем тумалла, манна кĕрпинче йăваласа хĕртнĕ çатмара икĕ енчен те ăшаламалла.

### «Хĕвел» салат

**Шăмминчен уйăрнă 200 грамм чăх какайĕ, 2 çĕр улми, 3 çăмарта, маринадланă 4 хăяр, майонез кирлĕ.**

**Илемлетмешкĕн сарă тата хĕрлĕ пăрăç, 1 банка çу çырли илĕр.**

Чăх какайне, çĕр улмине, çăмартана пĕçермелле. Тăваткалласа турамалла. 2 çăмарта шуррине илемлетмешкĕн хăварăр. Хăяра вĕттĕн турамалла. Пурне те хутăштарса майонез ярса пăтратмалла.

Салата ăшăх турилккене хумалла. Çиелтен çăмарта шурри сапмалла. Хĕрлĕ тата сарă пăрăça салат çине хĕвел евĕр илемлетсе хумалла. Хĕррине çавракан каснă çу çырли сапса тухăр.

### Тутлă купăста

Пысăкăх мар купăстана вĕттĕн турамалла, шултра терка витĕр 2-3 кишĕр, 1 хĕрлĕ кăшман кăлармалла. Пахча çимĕçе эмаль савăта хумалла, вĕтетнĕ 4-6 шăл ыхра, 0,5 л шыв, çур стакан сахăр, çавăн чухлех тип çу, 1/3 стакан апат уксусĕ, 1 апат кашăкĕ тăвар, тутă каламалăх пăрăç хушмалла. Йăлтах пăтратмалла, 3 литрлă кĕленче савăта тултарса сивĕтмĕше лартмалла. Талăкран тутлă купăста хатĕр те.

### Лимонпа апельсин кукăлĕ

**2 стакан хăйма, 1 çăмарта сарри, 500 грамм ирĕлтернĕ услам çу, 1 стакан сахăр, тăвар, 1/2 чей кашăкĕ апат соди, 500 грамм çăнăх, ăшне валли: 1 лимон, 1 апельсин, 1 стакан сахăр кирлĕ.**

Чуста çăрмалла, хăпарсан икĕ пая пайламалла, пĕри тепринчен пысăкрах пулмалла. Пысăкраххине сарса çатма тĕпне хумалла, айккисем çатма хĕрринчен усăнса тăччăр. Лимона, апельсина теркăламалла, сахăрпа пăтратмалла. Хутăша чуста çине хумалла. Çиелтен тепĕр татăкне хурса иккĕшне çыпăçтармалла. Шăрпăк пĕрчипе темиçе вырăнтан шăтармалла. Духовкăра 40 минут пĕçермелле, çиелтен сахăр çăнăхĕ сапса илемлетмелле.

### Ансат салат

**300 грамм тĕтĕмленĕ кăлпасси, пĕçернĕ 3 çăмарта, 2 хăяр, 300 грамм сыр, 200 грамм майонез, укроп, симĕс сухан кирлĕ.**

Кăлпассине, çăмартана тата хăяра улăм пĕрчи евĕр турăр. Сыра шултра теркăпа вĕтетĕр. Салата сийĕн-сийĕн хурса тухмалла: кăлпасси, хăяр, çăмарта, сыр. Çиелтен майонез сĕрĕр, вĕтетнĕ симĕс сухан, укроп сапăр.

### Шпрот салачĕ

**4 çăмарта, 1 банка шпрот, вĕтетнĕ сухари, 1 банка кăмпа, пуçлă 1 сухан, майонез кирлĕ.**

Çурма çаврашкан каснă сухана, вĕттĕн туранă кăмпана ăшаламалла. Пĕçернĕ çăмарта саррипе шуррине уйрăммăн теркăламалла. Салата сийлесе /2 çăмарта саррипе шурри – шпрот – сухан – майонез – сухари – майонез – кăмпа – 2 çăмарта шурри – майонез – 2 çăмарта сарри/ хумалла. Ăна 2-3 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла.

СЫВЛĂХ

## Шăнса пăсăлсан

● Пĕр литр тĕттĕм сăрана ăшăтмалла, чĕптĕм корица, 3-4 гвоздика, кăштах лимон хуппи, 3 çăмарта сарри, 2-3 апат кашăкĕ сахăр хушмалла. Хутăша кăпăкланиччен пăтратмалла, çулăм çине лартса хытиччен пĕçермелле. Сăрана кунне темиçе хутчен пĕрер стакан ĕçмелле, тÿрех лайăх витĕнсе выртмалла. Çак шĕвек чирлĕ çынна лайăх тарлаттарать, çавна май шăнса пăсăлни хăвăртах иртсе каять.

● Пĕр стакан вĕренĕ шыва 1 апат кашăкĕ чавка пуç ямалла, 40 минут тăрăлтармалла. Сăрăхтарнă хыççăн 1 апат кашăкĕ пыл хушмалла. Кунне икĕ хутчен çуршар стакан, ирхине тата çывăрас умĕн ĕçмелле.

Сăмса сывламаннинчен çак рецепт аван пулăшать. 100 грамм тип çăва шыв мунчинче çур сехете яхăн вĕретмелле. 45-55 градус таран сивĕтмелле, 2 апат кашăкĕ вĕттĕн туранă сухан тата вĕтетнĕ 3-4 шăл ыхра хушмалла. 2 сехет тăрăлтармалла, хушăран савăта силлекелесе илмелле. Сăрăхтарса çăва сивĕтмĕшре упрамалла. Усă куриччен малтан сăмса шăтăкне лайăх çуса тасатмалла та икшер тумлам ямалла.



● Пĕр чей кашăкĕ риса 6-7 стакан шыва ямалла, 1 апат кашăкĕ пĕтнĕк хушса çулăм çине лартмалла. Шыв вĕреме кĕрсен çулăма пĕчĕклетсе тепĕр 10 минут тытмалла. Çулăм çинчен илнĕ хыççăн шĕвеке вĕтетнĕ сухан хуппи хушмалла. Пăтратмалла, сăрăхтармалла. Эмеле кашни икĕ сехетрен 1/3 стакан ĕçмелле.

● 2-3 инжир çырлине вакламалла, çур литр сĕте ярса вăйсăр çулăм çинче кăшт вĕретмелле. Инжирпа сĕт хутăшне ăшăлла ĕçмелле. Пыра çемçетет, ÿслĕке ирттерет. Пепкене те ĕçтерме юрать.

ЧӐРЕЧЕ АНИНЧЕ

## Ăшă та, нÿрĕк те кирлĕ



**Çуралнă кунра гусмани чечек парнелерĕç. Ăна мĕнле пăхмалла-ши? Килти условире пĕтсе ларасран хăратăп.**

**Елена.**

Унăн тăван çĕр-шывĕ – Панама тата Колумби. Ÿсен-тăран хĕртсе пăхакан хĕвелтен питĕ хăрать. Пÿлĕмре кĕркунне-хĕлле 25°С пулсан аван. Çак тапхăрта вăйлах шăвармалла мар.

Гусмани çуркунне-çулла шыв юратать. Сывлăшра 70-80 процент нÿрĕк пулсан лайăх. Кĕркуннеччен шывпа пĕрĕхме сĕнеççĕ. Уйăхра пĕрре имçампа апатлантармалла. Икĕ çултан куçарса лартма юрать. Чечек вăрлăхран, хунавран ĕрчет.

КАЛА-ХА, ТĔЛĔКĔМ



**Шашкă тирĕнчен çĕлетнĕ кĕрĕк –** обществăра хисеп те пуянлăх çĕнсе илессе,
**арçын валли шашка кĕрĕк туянни –** пысăк тăкака, тупăшлă çĕнĕ ĕç шырама тивĕ,
**шашка çĕлĕк –** пуласлăхран, пуян савнине çухатасран шикленессе,
**шурă шашка кĕрĕк –** юратнă çын пуян та хитре пурнăça хапсăнасса, улталасса,
**кĕрĕк тăхăнни –** килти тăнăçлăха, çемьере çураçу хуçаласса,
**качча кайман хĕрарăм кĕрĕк тăхăнсан –** пуян çынпа çывăх вăхăтра пĕрлешессе,
**çакăн евĕр тĕлĕке арçын курсан –** унăн еркĕнĕ çинчен арăмĕ пĕлессе,
**çĕтĕлнĕ е кĕве çинĕ кĕрĕк –** чире, тăкака,
**кĕрĕк парнелени –** тĕлĕнмелле кĕтменлĕхе,
**юс тирĕнчен çĕлетнĕ кĕрĕк –** кăсăклă паллашăва,
**енот тирĕнчен çĕлетнĕ кĕрĕк –** тус-юлташăр мăн кăмăлланасса,
**каракуль кĕрĕк –** чăн пурнăçра ăна туянас çук,
**тăлăп** йывăр пуласлăха пĕлтерет.

УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

● Кăштах шăннă çĕр улмине малтан – сивĕ, унтан вĕри шывра тытмалла. Пĕçернĕ чухне 1 апат кашăкĕ уксус хушмалла.

● Чăх какайне пĕçерес умĕн лимон сĕткенĕпе сирпĕтсен тутлăрах пулĕ.

● Сухана блендерпа е миксерпа ан вĕтетĕр. Кун пек тусан вăл йÿçĕ пулать.

● Хура тула пĕçерес умĕн хĕртнĕ çатмара 3-4 минут ăшаласан пăтă тутлăрах пулĕ, лайăх сарăлĕ.

●Ăшаланă чухне сухана тип çу хĕртнĕ çатмана ямалла мар – вăл хăвăрт çунать. Сивĕ çатмана хурса ăшаласан аванрах.

●Çĕр улми пĕçернĕ чухне тăвара çулăма сÿнтерес умĕн 10 минут маларах çеç ямалла: паха япаласем ытларах сыхланса юлĕç.

●Тутăхман йышши савăта çĕр улми пĕçернĕ шыв ярса вĕретсен вăл çĕнĕ пекех йăлтăртатĕ.

ЫЙТУ-ХУРАВ

## Кролик çурисене пăхмасть

**Кролик ами çăвăрланă хыççăн çурисене пăхмарĕ. Читлĕхрех вилсе выртрĕç. Мĕншĕн çавăн пек хăтланчĕ-ши амăшĕ?**

**Светлана ПОРФИРЬЕВА.**

Канаш районĕ.

Ахăртнех, вильăха шăплăхпа тивĕçтермен эсир. Çăвăрланă хыççăн малтанах кунсенче кроликсене уйрăм çĕре куçармалла, апат панă чухне те асăрханмалла, вĕсен лăпкăлăхне кансĕрлемелле мар. Çавăн пекех ĕçмелли-çимелли çителĕксĕр чухне те ама усалланать. Хăш-пĕрин çут çанталăк панă амăш туйăмĕ вăранмасан та пултарать. Тепĕр хут çăвăрлаттарнă хыççăн палăрать çакă. Амăшĕ пăрахнă çурасене пипеткăпа тăрантарса ÿстермелле.

ТĔКĔР УМĔНЧЕ

## Начарланас тесен





***Начарланас тĕллевпе выçă çÿрениччен усси сахал. Кĕлетке йывăрăшне чакарас тесен диетологи принципĕсене пăхăнма сĕнеççĕ.***

● Кунне виçĕ хут апатланмалла. Унсăр пуçне ирхи, кăнтăрлахи апат хыççăн кăштах çисе илмелле.

● Кашни кунах 1,5-2 литр шыв ĕçмелле. Кофе, чей вăл шута кĕмест. Пĕрремĕш стакана – ирхи апат умĕн 10 минут маларах. Кун тăршшĕпе хырăм выçнине туйсан та шыв ĕçмелле.

● Çырткаласа илнĕ чухне çăкăр-кукăль тавраш, пылак ан çийĕр. Хырăм выçнине 1 çăмарта, темиçе татăк краб какайĕ е ветчина аван ирттерĕç.

● Каçхине ултă сехет хыççăн сĕтел хушшине лармастăр пулсан ирхине апат çиме тăрăшмалла. Ирех тăратăр пулсан кăнтăрлахи умĕн иккĕмĕш ирхи апат кирлех.



КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# «Саншăнах тапать чĕрем»

Тăван яла кайсан ĕлĕкхи пĕлĕшĕмпе Кĕтерукпа тĕл пултăм, вăл мана хăйĕн патне хăнана пыма чĕнчĕ. Вулавăша кайма тухнăччĕ те урамра нумаях сăмахласа тăраймарăм, каç пулттипе йăпăртлăха кĕрсе тухма шантартăм. Эпĕ çитнĕ чухне ун патĕнче кӳршĕ хĕрарăмĕ ларатчĕ. «Ман вырăна çын килчĕ», − текелесе вăл тӳрех тухса шăвăнчĕ. Кил хуçипе икĕ сехет майлах аса илӳ çăмхине сӳтрĕмĕр.

Кĕтерукăн мăшăрĕ Петĕр манран пĕр çул аслăрахчĕ, эпир унпа улаха, вăййа, клуба пĕрле çӳреттĕмĕр. Кайран, ялтан тухса кайсан, вĕсем патне хăнана час-часах пыркалаттăм эпĕ. Петĕр 60-тан иртсен çĕре кĕчĕ. Арăмĕ халĕ пĕччене пурăнать, икĕ ывăлĕпе икĕ хĕрĕн çемйисем − Шупашкарта, тепĕр хĕрĕ кӳршĕ ялта тĕпленнĕ. «Ачасем патне кайса килкелетĕп, анчах чылай вăхăт хваттерте пурăнсан хама читлĕхри кайăк евĕр туятăп», − сăмахларĕ кинемей.

Пĕрлешиччен Петĕрпе Кĕтерук савнисем пек çӳресе те курман: хутран-ситрен калаçкаланă, тахçан та пĕрре вăйăран пĕрле киле кайнă. Пикене Мĕтри куç хывнăччĕ, вĕсем пӳрт умĕнчи сак çинче ларса вĕçĕмех темĕн пăшăлтататчĕç. Анчах та хĕр юратнă каччипе пĕрлешеймерĕ. Петĕр ăна вăйпах арăм туни çинчен ялта сас-хура тухрĕ. «Мĕншĕн-ха эсĕ Мĕтрие качча тухман, иксĕр уйрăлми çӳреттĕр-çке?» − ыйтрăм меллĕ самантпа усă курса. «Хĕр − япала калам. Кăрлачăн 9-мĕшĕнче Веруксем патĕнче улах лартăмăр. «Хĕрсем, атьăр çветке чупар!» − сĕнчĕ Верук. Пурте хаваспах килĕшрĕмĕр, кам − туя, кам − шăпăр, ухват тытса тухса кайрăмăр. Праски аппа патĕнчен кукăль «хĕстерсе» тухрăмăр. Тепĕр пӳрте пырса кĕтĕмĕр − унта хĕрарăмсем пухăннă та сăмакун ĕçсе లараççĕ... Пурин патĕнче те тĕпĕртеттертĕмĕр, ухват, туя таврашĕпе урайне кĕрслеттертĕмĕр. Юлашкинчен Петĕрсем патне кĕтĕмĕр. Килте Анук аппа кăначчĕ, кăштахран хĕрĕнкĕ Петĕр çитрĕ. «Анне, хĕрсем килнĕ чухне авланас мар-ши? Вăхăчĕ те çитнĕ... Кунта Кĕтерук та пур авă», − тет хайхи. Мана ыталаса илчĕ те пите хупланă тутăра туртса антарчĕ. Хĕрсем пĕрин хыççăн тепри тухса тарчĕç, Петĕр мана тытса юлчĕ. «Эсĕ кĕçĕр манăн арăм пулатăн», − вĕçертмерĕ вăл мана, унтан çĕклесе илчĕ те сак çине лартрĕ. «Эсĕ ухмаха тухнă-и, Петĕр, е манран мăшкăллас тетĕн-и?» − макăрса ятăм эпĕ. Каччă мана татах ыталаса илчĕ: «Çук, Кĕтерук, кулмастăп. Чăннипе калатăп, юрататăп эпĕ сана. Пĕр сивĕ сăмах каласа кӳрентермĕп, алă çинче çĕклесе çӳрĕп. Килĕшсем манăн арăм пулмашкăн», − куççуле пит çинчен шăлчĕ вăл. Анук аппа та ывăлĕн хутне кĕчĕ: «Кĕтерук, ан макăр, ĕненсем ăна. Эпĕ те сана хăйĕн кăкăрĕ çине хучĕ, ачашшăн ыталарĕ те ман çумран уйрăлмарĕ. Пĕр самант сăмах чĕнмесĕр ларнă хыççăн йĕкĕт амăшне манăн атте-аннене чĕнме ячĕ. «Ваçук пиччепе Наçук инке хирĕç тĕк хĕрне пĕрле илсе кайччăр», − терĕ. Анук аппа тухса кайрĕ. Петĕр мана хăйĕн чĕр куççиййĕ çине лартрĕ, çурăмран ачашларĕ. Пуçра тĕрлĕ шухăш явăнчĕ çавăн чухне: Петĕр арăмĕ пулма килĕшмелле-и е çук-и? Мĕтри мана нихăçан та ун пек çепĕççĕн ыталаса курман. Петĕр Мĕтрирен çӳллĕрех, çутăрах сăн-питлĕ, çар хĕсметĕнче моряк пулнă вăл. Юлашки вăхăтра Мĕтри юратни пирки иккĕленеттĕм. Пĕр сехет пек иртсен Анук аппапа пĕрле атте-анне çитрĕç. «Петĕр япăх каччă мар, ĕçчен, тракторист, эпир ун пек кĕрӳ туянма хирĕç мар», − пĕлтерчĕç хăйсен шухăшне. Вĕсен мансăр пуçне тата икĕ хĕр ӳсет-çке, пичче салтакра, аппа кӳршĕ яла качча тухнă. Тĕрĕссипе, эпĕ атте-анне киличченех Петĕрпе çемье çавăрма килĕшес тесе тĕв турăм ĕнтĕ: хăçан та пулин пур пĕрех качча каймаллаçке. Упăшка мана нихăçан та сивĕ сăмахпа кӳрентермен, аллине ирĕке яман. Лайăх мăшăрччĕ вăл, шел, вăхăтсăр çĕре кĕчĕ», − çапла каласа пачĕ Кĕтерук.

**Александр ВИШНЕВСКИЙ.**
Шупашкар хули.

КУН КĔНЕКИНЧЕН

# Хĕвеле шырарĕ кĕмĕл сывлăм...



**Хĕвел питтинче сарăхма пуçланă çыру алла лекрĕ. Те илсе уçас, те тĕкĕнес те мар?.. Çын япалине тытма хушмаççĕ те... Çапах мĕн çырнине пĕлес килет.**

**Çур сехет шухăшларăм пуль çав ăш çунтармăш япала çине пăхса. Юлашкинчен, чăтса тăраймарăм, куç хывнă çырăва алла тытрăмах.**

**«Ырă кун!..**

Сан ятна сасăпа калама та, çырма та хăяймăп. Ăна ăшра çеç татти-сыпписĕр асăнатăп. Пĕлместĕп, тен, куçран пăхса каламаллаччĕ-и? Çук! Çук... Пултараймастăп. Хăюлăхăм çитмест. Пĕрре курсах тыткăна илтĕн вĕт мана. Мĕнле-ха... Хăв вара курăнмастăн та, юнашар та лармастăн, лăплантармастăн. Пĕр эпĕ кăна шăплăхра сăнарупа аташатăп, ĕмĕтре вара сан çума тĕршĕнетĕп. Эх! пулминччĕ ман пурнăçра çав кун пĕрех хут! Туй кунĕ...

Нумайлăха пымарĕ /питĕ шел!/
Пĕлтерĕшлĕ те пысăк кун шăв-шавĕ.
Каç пулсанах пушанчĕ мăн тĕпел.
Хăнасене ăсатрĕ туй чаршавĕ...

Илемлĕн килчĕ çак ирхи çут шуçăм,
Анăçалла ăсатрĕ ыйхине.
Ма хĕвеле шырарĕ кĕмĕл сывлăм?
Ман чун вара шав кĕтрĕ çĕннине.

Тăрук теме систерчĕ шухă çилĕ.
Е хам чĕре ытла туйăмлăран
Ним çук çĕртен пĕр вĕçĕм тĕрлĕ-вирлĕ
Хумхантăм. Канăç татăлчĕ манран.

Сана куç хыврăм...
Ирĕклĕн, вăлтмасăр.
Сахал та, чăн сăмах пулса калам −
Унччен çуралнă шухăшăм − сăлтавсăр.
Паянтанпа эс − ĕмĕтри тумлам.

Тек нимĕн те хушса калаймастăп, çыраймастăп. Ятсăр-шывсăр сана ярса паратăп çеç çак йĕркесене. Вуласамччĕ, калас шухăшăма уйласа илсемччĕ шур хута парăнтарнă вун-вун сăмахран...»

Ырату-юрату сăвви... Ăнланма тӳрех йывăртарах та... Ахăртнех, пĕр-пĕр тусĕн туйне кайнă хĕр пĕрчи ют каччăна килĕштерсе пăрахнă. Анчах мĕншĕн çырăвне ахаль вырттарать-ши? Аптрамалла.

**ВĂРТТĂН ВУЛАВÇĂ.**

САНĂН ТУСУ ПУЛАМ-И?

**Хаçат пулăшнипе ялта пурăнма килĕшекен ырă кăмăллă чăваш хĕрĕпе е хĕрарăмĕпе çемье çавăрасшăн. Эпĕ Миша ятлă, 37 çулта, 165 сантиметр çӳллĕш, 65 килограмм йывăрăш. Шупашкар районĕнче пурăнатăп, ĕçлетĕп.**

***

**"Чăваш хĕрарăмĕ" хаçата тахçантанпах çырăнса илетĕп, ăна юратса вулатăп. Мана мăшăр тупма пулăшсамăр.**

**Эпĕ пĕчĕк хуçалăх тытса пыратăп. Ялта ĕçлеме ӳркенмен, пĕр-пĕрне ăнланса пурнăç тума тăрăшакан 27-35 çулти хĕрарăмпа паллашасчĕ. Вăл ял хуçалăх енĕпе аслă пĕлӳ илнĕ специалист пулсан лайăхчĕ. Ача пурри чăрмантармĕ.**

**НИКОЛАЙ.**

**Телефонсем редакцире.**

ШУХĂШ

# Çĕмĕртпе юман

Çуркунне. Хĕвел Атăл хĕрринчи вăрман енчен ярăнса, çут çанталăк хăйне кĕтнĕрен-ши е каярах юлнăран, хытăрах хĕрелсе тухать. Пĕтĕм ӳсен-тăран, чĕр чун, кайăк-кĕшĕк ăна хапăлларĕ. Таврана çак ăшăпа пĕрлех çĕнĕ, ырă та таса, чĕрĕ сывлăш сарăлма пуçларĕ. Çавна пула пурте пĕр-пĕрне хăйсен ăшĕнче нумайранпа усранă шухăшсене уçса васкамасăр каласа пама тăрăшаççĕ. Çав хушăрах хăшĕ-пĕри иртес саманта ытараймасăр, пăлханса кайнипе-ши, чунри вăрттăнлăха уçма хăяймасăр куçне тартать. Мĕн чухлĕ хумхану!

Хĕвел хăпарнăçем шевлисемпе вăрман хĕрринче ӳсекен патвар та çамрăк юман тураттисенчен сĕртĕнмесĕр иртеймерĕ. Ачашшăн лăпкаса вăратрĕ. Юманĕ тутлăн карăнса лĕп çилĕ вĕрнĕ май тураттисене хускатрĕ, юнашар ӳсекен çĕмĕрте ерипен тĕксе илчĕ. Лешĕ вара, çинçескер, лутраскер, хĕл ыйхине сиреймен курăнать. Юман сĕртĕннĕрен варкăшпа вăл ыйхăран вăранчĕ, иртнĕ хĕл юлашкисенчен силленсе тасалчĕ. Çĕмĕрт те çуркуннене хатĕрленчĕ...

Вăхăт шурĕ. Тавралăх юр-шывран тасалса пынăçемĕн кайăксем те хăйсен йĕркине пăхăнса ăмăртмалла юррисене шăрантараççĕ. Йывăççем ешĕл тумтир тăхăнаççĕ. Çĕмĕртпе юман та симĕс кĕпе уртса яма ĕлкĕрчĕç. Ку çи-пуçпа лутра пике чиперленсе кайрĕ. Тĕксĕм туратсем çинче симĕс шӳлкемеллĕ çулçă кăларчĕ, шурă пĕчĕк папкасенчен таврари йывăççене илĕртсе чечек çурчĕ.



Юман çакна сисрĕ. Вăл хăйĕн çумĕнче чиперкке çитĕннĕрен ыттисен умĕнче мăнаçлăн курăнма тăрăшрĕ. Кашни ир умри пикене турачĕсемпе ачашланăн сĕртĕнсе хумханчĕ. Чунра та, çут çанталăкра та хаваслă.

Лутра пике шап-шурă чечекре. Качча каяс хĕр пек курăнать шур пĕркенчĕклĕ çĕмĕрт. Унтан чиперри пур-ши тата çак вăхăтра? Ытарайми, манăçми çут çанталăк саманчĕ. Шел те, сайра хутра асăрхатпăр çак илеме. Хамăр пурнăçра та çавах. Çут çанталăк, этем кун-çулĕ − пĕрех. Пĕрле ӳссе çитĕнсе пĕрне-пĕри пăрахас марччĕ. Пĕри юман пек маттур, тепри çĕмĕрт пек хитре, черчен пултăр. Пĕрне-пĕри упрар, сыхлар, килĕштерер. Çут çанталăк çавна кăмăллать, юрататть.

**Тайра ЛЕОНОВА.**

Леонид МАЯКСЕМ

# Вăт ку – карчăк...

*/Шӳтлĕ калав/*



Çĕнĕ çул умĕн арăм мана хулари тĕп пасара çитсе сурăх ашĕ туянма хушрĕ.

– Ас ту, – терĕ çутă хутаç тыттарса, – свешăййи, шăмсăрри пултăр: шашлăк валли кирлĕ.

– Шашлăк? – тĕлĕнерехĕн тăсрăм эпĕ. – Тен, унашкалах иртĕхмĕпĕр, Тарье? Чăмăрла çĕр улми пĕçерĕпĕр те... Тăварланă кăмпапа, помидор-хăярпа... Чăн-чăн улпут апачĕ!

– Саншăн çапла пуль те, ман вара ятлă хăна-вĕрле умĕнче намăсланас килмест! – сассине хăпартрĕ мăшăрăм.

– Хаксем пирки калатăп-çке, – çемçен хирĕçлерĕм эпĕ. – Вĕсем халь, хăвах пĕлетĕн, ай-яй хытă çыртаççĕ. Укçа-тенки вара чул айĕнчен хĕсĕне-хĕсĕне, макăра-макăра тухать. Хăшĕ-пĕри какай тути-масине тахçанах маннă, сĕтел çинче хура сăкăр пурришĕн те Турра тав тăваççĕ. Нумайăн пулаççĕ-и? Ашне пĕр миçе кило илмелле?

– Çиччас шутлатпăр, – пӳрне хуçрĕ Тарье. – Акционерсен «Туслăх» обществин ертӳçи Карп Иванч... «Атăл» çурт-йĕр хуçалăхĕн управляющийĕ Степан Павăлч... Сбербанк заведующийĕ Манефа Христофоровна... «Хĕвелтухăç» гастроном директорĕ Степанида Васильевна... Пĕтĕмпе – вунă мăшăр.

– Вопшĕм, çур пăт! Вичĕ пин тенкĕ кăлар та пăрах, – кăмăлсăррăн мăкăртатрăм эпĕ. – Ытла çуллă пулмасть-ши ку?

– Санран ыйтмаççĕ. Хыçкаланса ан тăр, чуп хăвăртрах!

– Юрать, чĕкеçĕм, халех! – терĕм те хăпăл-хапăл тухса вĕçтертĕм.

Эпĕ çитнĕ чух пасар вĕллери хурт пекех сĕрлетчĕ. Мĕн кăна сутмаççĕши кунта! Лайăххах шырасан чăх сĕчĕ те тупăнать-тĕр.

Тĕрткелеше-тĕрткелеше аш-пăш павильонне кĕтĕм. Тăрăхла вырнаçтарнă сĕтелсен хушшине васкамасăр, ун-кун пăхкаласа утатăп.

– Эй, Павăл! – илтĕнчĕ сасартăк. – Микуç ачи!

Чарăнтăм: «Кам-ши ĕнтĕ ку, мана та пĕлекенскер?» Куçа лайăххах уçса пăхрăм та... Васпати: Кушак Ваççи!

Эпир унпа тантăшсем, пĕр урамра выляса-çапăçса ӳснĕ. Йытă-кушака хăвалани те, хĕр ачасене çивĕтрен туртса çуйăхтарни те, ют пахчари кишĕр-хăяр йăранĕсене чăлхатни те – тем те пулнă.

Ялти шкултан вĕренсе тухсан эпĕ профессипе техника училищине чавтартăм. Ваççа вара, «манран пур пĕрех прохвессăр пулас çук» тесе, колхозрах юлчĕ. Çавăнтанпа курманччĕ-ха ăна. Халь акă... Палачăнни пек вăрăм аварлă пысăк пурттине юман каски çине лачлаттарчĕ те юнпа вараланнă аллине саппун аркипе шăлкаласа ман паталла васкарĕ.

– Эсех-и ку, Павăл? Турăçăм! Еплерех ашкăрса кайнă – çапса пăрахсан та паллайрас çук! – кĕреçе пек сарлака аллипе çурăмран лăп-лап çапрĕ хĕрĕнкĕ Кушак ывăлĕ. – Мĕн туса çӳретĕн эсĕ кунта? Мĕн шыратăн?

– Акă, – тетĕп пушă хутаçа силлесе, – арăм аш туянма кăларса ячĕ. – Ху тата? Така сутма килтĕн-и?

– Сутма мар, ваклама! – ахăрчĕ Ваççа. – Пĕрне ĕне какайне тирпейлесе паратăп, теприне – сурăххине. Чим-ха, сана мĕн какайĕ кирлĕ? А, шашлăк валли. Вçо яснă! Тăватпăр, чи тачкине – первосортнăйне! – майлаштаратпăр. Кунта эп, мĕнле калас... хăйне евĕрлĕ начальник! Аш-пăш аслă шкулне пĕтернĕ прохвессăр! Сана мĕн чухлĕ кирлĕ? Сакăр-тăхăр кило тетĕн? Суду вçо яснă! Тульăк малтан... Эс ытлашши васкамастăн-и?

– Çук. Ма?

– Кунта юнашарах – кут айĕнчех! – хупах усрĕç. Çуттине те ярса параççĕ. Сан шухăш-кăмăл мĕнлерех, Павăл? Тĕл пулнă ятпа кăштах ак кунта, – пыр мăкăльне шĕвĕр пӳрнипе шаклаттарчĕ Ваççа, – хума хирĕç мар-и?

– Çук, – тетĕп, – кăшт сыпнăшăнах çылăх пулмĕ. Çитменнине, сăлтавĕ те пур: Хĕл Мучи хапхаран шаккать.

– Атя, эппин, кайрăмăр! – хулран çатăрласа тытрĕ юлташăм. – Сурăху ниçта та тармасть...

Кĕçех хупаха кĕтĕмĕр.

– Акă тыт, – укçа сĕнтĕм Ваççана. Илмерĕ:

– Паян эп хăналап, манран тухать! – кăкăрне Ехрем купсалла каçăртрĕ ентешĕм.

Кăштахран сĕтел çине пĕр пулăштух шуррипе икĕ курка сăра пырса лартрĕ. Шăл айне хумалли илме те манман.

– Ну, каласа пар, тăванăм: ăçтан, мĕнле майпа килсе çакланнă эс кунта? – ыйтрăм Ваççаран пĕрер черкке ӳпĕнтернĕ хыççăн.

– О, ку – целăй истори, Павăл тусăм! – хăпартланчĕ Кушак ывăлĕ. – Ташă кĕнеке çырма пулать.

– Аннӳ – Анук аппа – мухтанăччĕ санпа пĕр виç-тăватă çул каярах, яла кайсан: «Тинех çын ретне кĕчĕ ман Ваççа, – тенĕччĕ. – Шупашкарта снапшенцăра çĕмĕрттерет!»

– Çапла, хăтланкаласа пăхнăччĕ кăштах, аппаланкаланăччĕ, – шĕвĕ майăхне пĕтĕрем пекки турĕ Ваççа. – «Юлташ» ятлă предприятие пĕлетĕн-и? Илтнĕ-и? Вăт çавăнта. Канăççăр ĕç: пĕр вĕçĕм – çул çинче, тăтăшах тĕрлĕ хула тăрăх хамăра кирлĕ чĕр тавар шыраса чупмалла. Тупрăн, алă çапса килĕшӳ турăн – йӳнĕрехпе сутма сăмах панă бизнесмен-каламçăсене ресторана илсе кайса шăвармалла. Пĕрмай – ĕçкĕ-çикĕ, пĕрмай мухмăр-сухмăр. Ак çапла таран, – майне ал тӳрчĕпе сĕрчĕ Кушак, – тăрантарса-йăлăхтарса çитерчĕ. Çавна пулах пĕр уйăх наркологи диспансерĕнче сывалма тиврĕ. Унтан тухрăм та хĕрес хутăм: «Çăва патне сирĕн «çăмăл» ĕçĕр!» – терĕм.

Кĕçех машинăпа кĕрлеттерме тытăнтăм, КАМАЗпа. Инçе çула çӳреттĕм. Эрни-эрнипе кабинăран тухаймастăм. Унтах выртса тăратăп, унтах – «столовăй». Пакăртатакан хырăма типĕ апатпа улталатăп та – каллех малалла... Унта та ĕçкĕччĕ. «Çул çӳрекен» марфуткăсем тупăнсах тăратчĕç. Темлерен, пĕсехе хĕрнĕ хыççăн, кювета чăмрăм. Правана туртса илчĕç, машинăна хам шутран юсаттармалла турĕç. Ун хыççăн пĕр хушă пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекелесе пăхрăм, унтан трактор тăвакан завода çитрĕм. Ниçта та ик-висĕ уйăхран ытла тытăнса тăман: кутран тапсах хӳтеретчĕç. Ара, кама кирлĕ хĕвел çути курмасăр кӳпекен «пичĕке пăкки!» Картиш-урам шăлса та куртăм, хуралçăра та лапăртатса пăхрăм. Çук, ниçта та ăнмасть, нимле ĕç çумне те алă çыпăçмасть. «Общăгăран» та хăваласа кăларчĕç. Ăçта каяс ĕнтĕ вăтăр урлă каçнă ват хусахăн? Яла таврăнас – чун туртмасть. Мĕн тумалла? Çакнашкал аптăравлă вăхăтра тахçан пĕрле ĕçленĕ Траккана тĕл пултăм. Каласа кăтартрăм хам нушана. Итлерĕ-итлерĕ те çаксекер мана: «Ан кулян, Ваççа, – терĕ, – вырнаçтаратăп сана пĕр ăшă йăвана. Ĕмĕр-ĕмĕр тав тăвăн, чиркӳре ман ятпа çурта çутăн!» – «Кам вара вăл, çав ăшă йăва хуçи?» – ыйтатăп, пĕр кĕтмен çĕртен йăтăнса аннă телейĕме ĕненмесĕр. «Тинтерех çеç çитмĕл урлă каçнă старушенци, – пĕр кулмасăр тавăрчĕ ăшă кăмăллă юлташăм. – Кăнтăр поселокĕнче пурăнать». – «Эс мĕн... шӳтлетĕн-и е мăшкăллатăн-и? Ман анне те утмăл урлă ярса пуснă кăна-ха», – кӳрентĕм эпĕ. «Шăртна тăратиччен малтан итлесе пĕтер, – лăплантарчĕ Тракка. – Хуçалăхĕ ун, Маюк аппан, такам та ăмсанĕ: висĕ пӳлĕмлĕ кирпĕч çурт, сад пахчи, ĕне, икĕ сысна, чăххи-чĕппи... Хăй вара уйри тăлăх хурама пек пĕр-пĕччен: ачи-пăчи те, хурăнташ-тăванĕ те çук. Пăшăрханать тепĕр чух: «Кил-çурт тилхепине тытса пыракан арçын алли çук», – тет. Ну вĕт, хваттере кĕтĕн, вырнаçран тейĕпĕр, – сăмахне тăсрĕ Тракка. – Çапла çулталăк, – ытла нумай – иккĕ иртет. Юлашкинчен, пĕр ырă кун, карчăк урине тăссан, пĕтĕмпех – йăлтах! – сана юлать. Хуçа, так сказать, пулатăн. Ăнлантăн-и, тăм пăшал?»

– Кĕскен каласан, йышăнчĕ мана Маюк аппа, – калавне шутарчĕ Ваççа. – Апат пĕçерсе çитерме, кĕпе-йĕме çуса утюглама пулчĕ. «Укçа илместĕп, хамăн та çителĕклĕ, – терĕ. – Эсĕ вара, ывăлăм, хевтӳ çитнĕ таран хуçалăхра кăштăртат». «Кăштăртатасси, эпĕ ăнланнă тăрăх, çакă пулчĕ: çĕр улмипе пахча çимĕç туса илмелле, ĕне валли утă-улăм хатĕрлемелле, самăртакан сыснасем валли çывăхри столовăйĕнчен апат-çимĕç юлашкисене йăтмалла – тата çĕр те пин ĕç. Пĕр сăмахпа, хам ирĕк пуççăн – никам хистемесĕр – мăя сӳсмен тăхăнтăм, штатпа пăхман тарçă пулса тăтăм. Хам вара пур пĕр пуçа усмарăм: «Юрĕ, – шухăшларăм ăшра, – эпир ытлашши мăн кăмăллă йышшисем мар – тӳскелĕпĕр мĕнле те пулин».

Вăхăт хуллен-майĕпен малаллах шурĕ. Ман карчăк вара тупăка вăртасси пирки асăнмарĕ те, çав-çавах качча каяс хĕр пек çиçкĕнсе-вашкăртса çӳрерĕ. Каккуй унта! Эмел мĕнне пĕлмест. Нихçан чирлесе курман. «Тур сывлăх парсан тăхăр вуннăсене çитетĕп пуль-ха, – текелет тепĕр чух, çырла эрехĕ сыпсан. – Анне те ман çĕр çулалла хăваласан кăна çĕре кĕчĕ...» Вăт сана «кĕç-вĕç урине тăсать!»

– Нивушлĕ халĕ те çав «эксплуататор» патĕнчех пилĕк аватăн? – ыйтмасăр тӳсеймерĕм эпĕ.

– Ан пӳл, малалла итле, – сăрине тутлăн сăрăхтарчĕ Ваççа. – Эрне каярах çаксекер, мана мĕн-мĕн тумаллине хушса-кăтартса хăварнă хыççăн, таçта туха лĕпĕстетрĕ. Эпĕ, хуçалăхри ĕçсене вĕçлесен, кăмака хыçĕнче таракан флягăран пĕр курка чие эрехĕ ăсса хаплаттартăм та диван çине – телевизор пăхма – тăсăлса выртрăм. Кĕçех диктор республикăри хыпарсемпе паллаштарма тытăнчĕ. Акă вăл: «Халĕ сире, хаклă телекуравсăсем, Атăл хĕррине çитсе курма чĕнетпĕр», – терĕ те оператор вакра шыва кĕрекенсене кăтартма пуçларĕ. Пилĕк арçынпа пĕр хĕрарăм. Пурте тахçанах асатте пулма ĕлкĕрнĕскерсем. Пĕрин хыççăн тепри, тюленьсем пек, пăртан тасатнă пысăк вакка чăмаççĕ. Тухаççĕ те, вĕри мунчаран вăркăнса тухнăн, зарядка тăваççĕ, çăмлă пит шăллипе шăлăнаççĕ. Йĕри-тавра пухăнса тăнă карма çăварсем кĕрĕк-пальтопа, çĕлĕкпе, çăматăпа. Кусем вара трусçи вĕççĕнех юр çийĕн – çарран! – чалтаттарса çӳреççĕ. Çирĕм пилĕк градус сивĕре!

«Халĕ микрофон умне «моржсенчен» пĕрне – Мария Воробьевăна – чĕнетĕп, – пĕлтерчĕ корреспондент кăштахран. – Калăр-ха, Мария Васильевна: хăçантанпа туслă эсир ку спортпа?» – «Пенсие тухнăранпах, – терĕ «морж» ман хуçа сассипе. «Пулăшать-и сивĕ «ванна» сире?» – «Еплерех-шшă! Çак тарана çитсе те больница таврашне ура ярса пусман...» Ялт! сиксе тăтăм та телевизор патне чупса пытăм. Çак вăхăтра оператор хĕрарăма çывăхран – пысăклатса – кăтартрĕ те... Турăçăм! Чăн та, ман карчăк!

Лешĕ вара, пăр çинчи репортажа хатĕрлекенĕ, мана инфаркт çаптарасшăн пулнăн, хăйĕннех тăсрĕ: «Ӳтпӳрен кăна мар, чун-чĕрипе те таса Мария Васильевна. Перекет банкĕнче пухăннă укçи-тенкине те, çурчĕ-йĕрĕпе пурлăхне те – пĕтĕмпех – ашшĕ-амăшĕсĕр ӳсекен тăлăх-турата халалланă...»

Тӳсеймерĕм, чăлт! сӳнтертĕм çапса салатма хатĕр телевизор ешчĕкне, пур-çук «пурлăхăма» кутамккана пуçтарса чикрĕм те адью! Сыв пул, пĕтме маннă Маюк аппаçăм!

– Вăт çавăнтанпа – пĕр эрне ĕнтĕ – çак пасарта çăрăлатăп. Кунтах – хуралçă пӳлĕменче – выртса тăратăп. Пĕр сăмахпа – бомж, килсĕр-çуртсăр çапкаланчăк! – калавне вĕçлерĕ Кушак ывăлĕ.

– Халь вара... мĕнле шанăçпа пурăнатăн? Ĕмĕт-тĕллевӳ еплерех? – ентешĕм çине шеллереххĕн пăхрăм эпĕ.

– Ĕмĕт-тĕллев тетĕн-и? – пуçне йывăррăн çĕклерĕ Кошкин, сӳрĕк куçĕсемпе мана тĕллерĕ. – Наполеонăнни пек! Чи малтан «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçата тупса илетĕп. Унта арсăр арăмсемпе вата хĕрсем час-часах пĕлтерӳсем кăлараççĕ. Сăмахран, ак çакнашкаллисем: «Эпĕ, упăшкасăр тăрса юлнă аслă-чипер хĕрарăм, «пушă» арçынна шыратăп. Пурăнма кĕтес пур, укçа-тенкĕрен аптрамастăп. Кăмăла çырлахтаракан арçын тупăнас тăк эпĕ ăна юратма та, ачашлама та пĕлĕттĕм...» Ку çеç те мар – çӳллĕшпе йывăрăшне те, кăкăрĕпе купарчи сарлакăшне те кăтартаççĕ. Вăт, тупса ярăп та çавнашкал пуян арăм, шик! шăхăрса, маччаналла сурса кăна выртăп. Мĕнрен катăк эп э? Сăнăм-пуçăма никам та тиркеймĕ, хул пуççисем тĕреклĕ. Ар хăвачĕ те пур – ку таранччен намăс кăтартман. Такштă, пуçа усма иртерех-ха... Тавай, тĕл пулнă ятпа тепрерĕшне çавăрса хурар та – вара сан валли аш кайса суйлăпăр! – хăпартланчĕ Кушак ывăлĕ. – Сăмах паратăп: ча-аплă шашлăк пулать... Ну, Çĕнĕ çул ячĕпе, тăванăм!..

Çак кунсенче хурлăхлă хыпар çитрĕ: пирĕн хастар автор, Раççей Писательсен союзĕн членĕ Леонид Александрович Степанов /Маяксем/ пурнăçран уйрăлнă. «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат редакцийĕ унăн тăванĕсемпе пĕрле чун-чĕререн хурланнине пĕлтерет.

# Паллă ӳнерçĕ укçа çуккипе туй тăвайман



Паллă ӳнерçĕ Валентин Серов, Император ӳнер академийĕн тата Третьяковка галерейин Попечительсен канашĕн членĕ, вырăс чи пултаруллă портретисчĕ, киле пусăрăнчăк кăмăлпа таврăннă. Унăн юлташĕ, пĕр класра, унтан пĕр курсра вĕреннĕ Михаил Врубель, психиатри больницин палатинче асапланнă.

Серов ытти чух та питри йăл кулăпа çӳремен-ха. Унпа хутшăнма та çăмăл пулман. Тен, унăн хăрах хăлхи илтменни те чăрмав кӳнĕ? Серов вăрăм кун-çул пурăнса ирттернĕ, чап ун патне çăмăллăн килмен, ултă ача çуратнă арăмне арçын нихăçан та улталаман.

Шăпа малтанах пачах урăхла çул шантарнă. Юлташсем юнашар пулнă, пурте вĕсем пĕр çуртрах хăналаннă, пурин чунне те юрату çунтарнă. 1880 çулта Петербурга Ӳнер академине вĕренме кĕмешкĕн килсен Серов тăванĕ Аделаида Симонович патĕнче чарăннă. Вĕсен килĕнче тăватă хĕр ӳснĕ. Пиллĕккĕмĕшне усрава илнĕ. Оля Трубниковăна, çӳллех мар, лăпкă кăмăллă хĕре, каччă пĕрре курсах килĕштернĕ. Вĕренме кĕрсен Серов урăх хваттере тара илсе пурăннă, анчах Симоновичсем патне хăнана çӳреме пăрахман. Анчах та – пĕччен мар, юлташĕсемпе. Малтан – Владимир фон Дервизпа, унтан – Михаил Врубельпе, каярахпа – Илья Остроуховпа. Унтан Дервиз Симоновичсем патне пиччĕшне Валериана илсе пынă. Кĕçех туй та кĕрленĕ – Дервизсем икĕ хĕрне качча илнĕ. Чăн та, вĕсене нимĕнле йывăрлăх та кĕтмен – ашшĕ Патшалăх канашĕн членĕ пулнă, куккăшĕ чи пуян çынсенчен пĕри шутланнă. Серовăн кĕсйинче вара çил шăхăрнă. Çавна пулах Ольăпа иккĕшĕ тăхăр çул... туй тăвайман. Иккĕшĕ те хăйсен йăви пирки ĕмĕтленекенскерсем çак йывăрлăха çапах та чăтса ирттернĕ.

...Киле çитнĕ май Серов пĕтĕмлетнĕ – арăмне вăл, чирлине пăхмасăр, Врубель çинчен каласа парать çапах та... Лельăн сăнĕ улшăннă, вăл мăшăрне ӳпкелеме пуçланă. Серов хăйĕн айăпне нихăçан та йышăнман, анчах та хальхинче, пуçне сĕтел çинчи турилкке çине чиксе лараканскер, çакна тума хатĕр пулнă...

– ...Эсĕ патша çемйипе хирĕçме, вĕсене кӳренме мĕнле хăйнă? – ӳпкеленĕ арăмĕ. – Император сан умра мĕн айăпа кĕнĕ? Портрет вĕсене тивĕçтерменшĕн киçтĕкӳсене пуçтарса тухса кайнă... Михаила мĕншĕн кӳрентерсе пĕтернĕ? Вăл хăйне капла та начар туйнине курмарăн-им?

...Врубелĕн “Демон поверженный” картини нумай шăв-шав çĕкленĕ. Третьяковка Попечитель канашĕн прогрессивлă пайĕ – Серов, Боткина-Третьякова тата Остроухов – çак ĕçе консерваторсем модернистсене килĕштермесĕр урса кайса критикленине пăхмасăрах галерея валли туянма хирĕçлемен-ха. Анчах хăшпĕр саманта асăрхамасăр вĕсем те иртмен. Серова, сăмахран, демонăн сылтăм алли килĕшмен. Урса кайнă Врубеле Остроухов аран-аран лăплантарнă хыççăн ӳнерçĕ çапах та алла улăштарнă. Унтан Серова... демон урисем тивĕçтермен. Сăмах çине сăмах... Врубелĕн тарăхнипе куçĕ чарăлнă, сасси тытăннă, пичĕ шурса кайнă... Юлашкинчен ĕçе çамрăк коллекционер Владимир фон Мекк туяннă. Банкета Серова та, Остроухова та чĕннĕ. Врубель малтан хăйне алăра тытнă-ха, виççĕмĕш черкке хыççăн вара кăмăлне ирĕке янă, сĕтел хушшинче ларакан пур художнике те темĕн те пĕр каласа кӳрентерсе пĕтернĕ... Çакăн хыççăн вăхăт нумай та иртмен, Врубеле больницăна илсе кайнă. Леля упăшкине Михаила лăплантарайманшăн ӳпкеленĕ – çавăнта пырса, тен, хулпуççирен кăна лăпкамалла пулнă. Валентин чĕнмен. Мĕн калăн ĕнтĕ кунта?..

Серова амăшĕ хăй пултарнă таран воспитани панă-ха. Арçын ача çывăх çыннинчен урăхларах пулса ӳсме тăрăшнă, анчах юна хирĕç каяймăн... Серов йăлт амăшне хывнă: ун пекех хаяр, ун çумĕнче хăтлă мар...

Ашшĕ, паллă композитор, арçын ача улттăра чухне вилнĕ. Амăшĕ, хăй вăхăтĕнче вĕренме пăрахнăскер, музыка теорине çĕнĕрен шĕкĕлчеме пуçланă. Ачине, чăрмантарасран, тусĕ Друцкая княжна патне ăсатнă. Каярахпа Серовсем Германире /хĕрарăм унта ачине, итлеменшĕн, пĕр вăхăт ют çемьере усранă/, Францире пурăннă. Хĕрарăм консерватори программине ниепле те вĕçлеймен. Раççее таврăнсан Валентинăн амăшĕ студентпа çыхланса кайнă та ун патне Украинăна куçнă. Анчах та çĕр-шывра халер чирĕ пуçланнă, амăшĕпе ывăлĕ каллех Раççее таврăннă. Хĕрарăм пĕр вăхăт кулянкаланă та ывăлне Репин ӳнерçĕ патне вырнаçтарнă. Арçын ача вĕренесшĕн пулман. Çавăнпа та гимназие куçарсан вăл вĕрентекенсен сывлăхне самай хавшатнă. Чăн та, искусствăна ăнланакансем унăн ӳкерчĕкĕсене ун чухнех хакланă.

Ашшĕ пурăннă тăк Валентинăн пурнăçĕ пачах урăхла çаврăнса тухатчĕ тен? Анчах халĕ интегралсемпе француз чĕлхи ăна ним тума та кирлĕ пулман. Репин Валентина Петербургри Ӳнер академине сĕннĕ. Анчах та Серов унта та вĕренсе пĕтереймен, хăйне мĕн кирлине илнĕ те ирĕклĕ ишеве тухнă. Амăшĕ тарăхнă – вăл çак вăхăталла шăпах Питĕре пурăнма куçнă, ывăлĕпе юнашар пулма ăнтăлнă. Анчах та Валентин унран тарса çӳреме пуçланă. Амăшне вăл юратман – лешĕ пурнăç тăршшĕпех ачи пирки шухăшламан та вĕт. Амăшĕ вырăнне Серов Репинăн пĕрремĕш арăмне Вера Алексеевнăна тата Елизавета Григорьевна Мамонтовăна хисепленĕ.

...Серов сехет çине пăхса илнĕ те сиксе тăнă – кĕçех амăшĕ килмелле. Хĕрарăм вĕсем патне хăнана пырассине маларах пĕлтернĕ, ывăлĕ вара унпа тĕл пулассинчен пăрăннă. Валентин Остроухов патне тухса кайнă, Леля вара хунямăшне Серов Попечительсен канашне кайнă тесе суйнă. Паллă ӳнерçĕ Остроухов чей сутса пуйнă миллионер хĕрне качча илнĕ. Çавăнпа вĕсен килĕ ытти пуянсенчен уйрăлса тăнă: хăтлă та пулнă унта, хуçисем тулăх пурăнни те тӳрех курăннă. Мрамор картлашкасем, пысăк картинăсем, хĕрлĕ йывăçран хатĕрленĕ сĕтел-пукан, пуян библиотека... Попечительсен канашне каясси пирки суйнă пулсан та Серовпа кил хуçи ĕç пиркиех калаçнă – сасăсен калăпăшĕ улшăннă-мĕн: халĕ консерваторсем ытларах, апла тăк чăнласах пахалăхлă картинăсем малашне, тен, Третьяковка валли туянаймĕç те... Серов отставкăна каяссине пĕлтернĕ, юлташĕ ăна чарма тăнă.

– 1905 çулта салтаксем халăх çине тĕллесе персен эсĕ академик званине илме килĕшмерĕн. Протестлесе санпа пĕрле нумайăшĕ пĕр çулпа утма хирĕç марччĕ. Анчах та патне çитсен эсĕ пĕчченех тăрса юлтăн. Попечитель канашĕнчен кайнинчен кама мĕн усси? Мускав мăнаçлăхĕ пĕтет – сана çакă кирлĕ-и?

Киле таврăннă май Серов çамрăклăха аса илсе пынă. Вĕсем, тăватă тус, пĕрле ĕçлеме шухăшланă, анчах шăпа урăхла çаврăнса тухнă. Фон Дервиз хăйĕн имениййĕнче пурăнать, Остроухов живопиçпе кăмăлне кура кăна аппаланать, Врубельпе Серов çеç çапла майпа ĕçлесе илеççĕ. Анчах та Серов чапа хăвăртрах тухнă. Вăл пултаруллă портретиста çаврăннă, унăн ĕçĕсене хакланă.

“Демон поверженный” ĕç Врубель шăпине аркатнă. Фон Мекк картинăна “Искусство тĕнчи” курава панă. Михаил ĕçне тата лайăхлатас тесе çĕрĕн-кунĕн ĕçленĕ. Демон сăнĕ хаярлансах пынă. Курав йĕркелӳçисем кĕçех ăнланса илнĕ – автор ĕçе пачах пĕтерсе хума пултарать. Анчах та кая юлнă ĕнтĕ – Врубель тавралăха пачах ăнланми пулнă. Остроухов кăна ыттисене ĕнентерме тăрăшнă – ăсран тайăлни мар ку, унра ыттисем ăнланма пултарайман пултарулăх вăраннă...

...Киле таврăннă май Серов каллех шухăша путнă – тин кăна йĕркеллĕ пек туйăнакан пурнăç, кур-ха, пĕр самантра тĕппипе арканма пултарать. Ăна, юратьха, ăннă. Репин Серова çамрăклах Мамонтовсемпе паллаштарнă. Вăл ӳкерни Мускав купсисене те, Питĕр пуянĕсене те килĕшнĕ. Халĕ унăн хăтлă çурт, юратакан арăм, ачасем пур. Анчах та пуласлăх мĕншĕн хăратать? Мĕн кăшлать чуна? Инкек кашнинпех юнашарах çӳрет-çке, хăть те хăш самантра та пуç çине йăтăнса анма пултарать...

Михаил Врубель вилнĕ хыççăн Серов тата тепĕр çул пурăннă. Михаил больницăра та ӳкерме пăрахман. Вăл çаплипех тăтăшах Серова аса илнĕ – калăн, унпа тавлашма пăрахман. Хавхалану техникăран вăйлăрах – Врубель ыттисене çакна ĕнентерме тăрăшнă. Чăн-чăн художникăн техникăна пăхăнса ӳкермелле мар, хавхалану мĕнле килнĕ – ăна хут çине çапла куçармалла. Анчах та Врубеле ĕнтĕ никам та ăнланман – сăмахсем пăтравлă тухнă, вĕçсе иртекен шухăшсене хăваласа çитеймен.

**/«7 Дней»/.**

*ТĔНЧЕРЕ – ТĔРЛĔРЕН КĔНЧЕЛЕ*

## Тĕлĕнтермĕш курав

Сан-Бернардо /Колумби/ хулинче тĕлĕнмелле ĕçсем пулса иртеççĕ – темиçе уйăх каяллах вырăнти çăвара пытарнă вилесем... çĕрмеççĕ, тупăкрах мумие çаврăнса пыраççĕ. Çакна пĕлсен “чĕрĕ вилесене” каялла чавса кăларма, туристсене кăтартма пуçланă.

Хăрушă çак куравра тĕп вырăнта – Пруденция Аскотта ӳчĕ. Вăл 10 çул каяллах вилнĕ. Унăн кĕлеткине халĕ кофта тăхăнтартнă, аллине гвоздика тыттарнă. Курава уйăхсерен вун-вун çын пырать.

Вилесем çĕрес вырăнне мумие çаврăннине чи малтан вырăнти çăва сотрудникĕ асăрханă. Вăлах никама ним каламасăрах темиçе вилене чавса кăларнă, ыттисене кăтартма пуçланă.

Мĕншĕн пулса иртет ку – никам та ăнлантараймасть. Çав шутра – ăсчахсем те. Чăн та, темиçе



шухăша çапах та пурте палăртаççĕ. Пĕрремĕшсем çакăншăн вырăнта ӳсекен, экологи енчен таса апатçимĕç “айăплă” тесе палăртаççĕ. Теприсем вилесем мумие çаврăннине çăва çинчи тăпра температурипе çыхăнтараççĕ. Виççĕмĕшсем ӳтсене Сан-Бернардо çыннисен рационĕнчи тĕп çимĕçсем – гуатиле тата балу – витĕм кӳрет пулĕ теççĕ...

## «Каçхи лĕпĕшсен» – хăйсен профсоюзĕ

Питĕрте хăйсен ӳтне сутса пурăнакан хĕрарăмсем хăйсен профсоюзне йĕркелеме тĕв тунă. Анчах юстици министерствин Питĕрти управленийĕ ăна шута илмен. Чиперуксем те парăнма васкаман – суда тавăç тăратнă. Ăнăçу хĕрарăмсен енче пулман. Суд “каçхи лĕпĕшсен” документчĕсенче социаллă, наци тата тĕн енчен хирĕç-тăру çуратма пултаракан самантсене асăрханă. Унсăр пуçне, коммерцилле мар организацисен списокĕнче “секс-работник” професси пулманни те палăртнине пурнăçа кĕртес енĕпе ура хунă. Çапах та хĕрарăмсем алă усмаççĕ – хăйсен “Кĕмĕл кĕл чечек” организацине пур пĕр шута илтересшĕн вĕсем. Хальлĕхе официаллă мар профсоюз, унăн ертӳçисем каласа кăтартнă тăрăх, ыттисенни пекех социаллă тĕллевсене пурнăçлĕ. Уставпа килĕшӳллĕн – секс-сотрудниксен хушшинче ыр кăмăллăх акцийĕсем ирттерес, хĕрарăмсен вĕренӳ шайне ӳстерес, вĕсене социаллă хӳтлĕхпе тивĕçтерес, сывлăхне сыхлас, физкультурăпа спорта аталантарас, прависене хӳтĕлес енĕпе ĕçлеме палăртнă.

## Ниагара шыв сикки пĕрремĕш хут шăннă



Америкăра кăрлач уйăхĕн пуçламăшĕнче чăтма çук сивĕ çанталăк тăни пирки МИХсем пĕлтерчĕç ĕнтĕ. Кун пекки унта тахçанах пулман. Çавна май Ниагара шыв сикки те пăрланса ларнă: юлашки çĕр çулта – пĕрремĕш хут. Вырăнти тĕлĕнтермĕше курма пынă туристсен умĕнче çакăн пек ӳкерчĕк: шыв çӳлтен юхса анать те тĕпне çитиччен шăнса ларать.

**/«Mr7.ru»/.**

## И-ХИ-ХИК

– Чунăм, эпĕ паян каçхине юлташсемпе хупаха сăра ĕçме каямха...

– Кайсам, ара, никам та майракунтан тытса тăмасть…

* * *

– Салам! Мĕнле пурăнатăн?

– Начарланма шухăшларăм-ха. Ĕнер фитнес дискне туянтăм.

– Мĕнле пек вара?

– Пĕлместĕп-ха. Сĕтел хушшине вырнаçрăм та торт çинĕ май диск пăхатăп халĕ…

* * *

Малтан хăть уйăхра икĕ хутчен те пулин ĕçе каяс килетчĕ. Халĕ вара шалăва та банк карттипе илме пулать те…

* * *

Машинăна чарсан пур паишник те: “Ĕçнĕ-и?” – тесе ыйтать. Çинĕ-и эсĕ, çук-и – никама та кăсăклантармасть ку.

* * *

– Тĕлĕнетĕп сирĕнтен: вăтăр çул пĕрле пурăнатăр ĕнтĕ – хулана тухсан вара халĕ те алăран çавăтăнса çӳретĕр. Вăт ку – юрату!

– Ара, вĕçертсен арăм тӳрех лавккана мĕн те пулин туянма чупать...

* * *

Арăмĕ – упăшкине:

– Эпĕ пулман тăк мĕн тăвăттăнччĕ-ши эсĕ?

“Мĕн тăвăттăм, мĕн тăвăттăм, – шухăшлать арçын. – Чи малтан, паллах, тӳрех юттисем патне кайăттăм. Ĕçĕттĕм, туртăттăм, мунчана, сунара, пулла, çӳрĕттĕм… Мĕн тумаллине тупăттăм-ха та…”

Сасăпа вара:

– Мĕн тăвăттăм ĕнтĕ – тунсăхласа вилĕттĕм, – тет.

* * *

Шăмă татки пăрахса панăшăн кашни йыттах хăйне ачашлама ирĕк памасть. Пикене ресторана чĕннĕ май каччăсен çакна асрах тытмалла.

* * *

– Чунăм, урай çумаллаччĕ, – тет арăмĕ упăшкине. – Пирĕн мунчала ăçта-ши?

– Эпĕ кунтах.

* * *

– Вăт тепĕр чух шухăша каятăп та...

– Ытти чух вара мĕн тăватăн эсĕ?

* * *

Маршруткăра.

– Каçарăр та, сире манăн сумка чăрмантармасть-и?

– Çук, ан пăшăрханăр.

– Чăрмантарать пулсан – калăр, эпĕ ăна айккинерех куçарăп.

– Юрать.

– Сумка сире çапах та чăрмантарнă пек курăнать – темĕнле чалăшса ларатăр эсир.

– Ну-у, кăштах кăна…

– Апла, илем-и айккинерех?

– Юрĕ, илĕр эппин.

– Аха – илĕр!!! Ăçта куçарас-ха манăн ăна!!! Тен, ăçта лартмаллине те калатăр?!

* * *

Судья:

– Залра ларакансем, шăпланăр, шăпланăр! “Судья пире тивĕçтермест!” – тенине тепре илтсен пурне те кăларса яратăп.

“Судья пире тивĕçтермест!” – илтĕнсе каять çавăнтах.

Судья:

– Айăпланакан, сире пырса тивмест ку.

* * *

– Çĕçĕ хăйраса пар-ха, упăшкан ниепле те алли çитмест, – тет кухньăра чей ĕçсе ларнă май хĕрарăм еркĕнне.

“Тăхта-ха, манăн та килте çĕçĕ çивĕч вĕт-ха”, – мĕлтлетсе илет кĕтмен çĕртен арçын пуçĕнче…

* * *

Автобусра.

– Сирĕн билет пур-и?

– Çук. Хăвăрăн пур-и-ха?

– Эпĕ кондуктор.

– Эпĕ вара – электрик. Мĕнле шухăшлатăр – манăн та электроэнергишĕн тӳлемесен те юрать-и?

* * *

– Начарланма тĕв турăм-ха.

– Тахçанах-и?

– Çур сехет каялла. Палăрать-и?

– Палăрать – куçу выçă.



* * *

– Ас тăватăп, пирĕн ача садĕнче те пĕр пуçтах пурччĕ. Пурне те хĕнетчĕ, мана çеç тивместчĕ. Эпĕ тĕреклĕччĕ çав, хирĕç çапма пултараттăм. Çавăнпах кăларса ячĕç мана садикрен.

– Мĕншĕн?

– “Хуралçăн ачасемпе çапăçма юрамасть”, – терĕç…

* * *

Улттăри Вовочка:

– Анне, шкулта миçе çул вĕренмелле?

– Вун пĕр.

– Институтра вара?

– Пиллĕк.

– Охо! Апла эпĕ тӳрех института каятăп!

* * *

Пĕр кирпĕчрен çурт купалама пулать-и? Пулать иккен! Пĕрре кăна мар – темиçе те. Çурт купалас вăрттăнлăхсем çинчен ПАИ инспекторĕ Сидоров каласа кăтартма пултарать.

* * *

Арăмĕ ĕçрен таврăннă çĕре упăшки кухньăра юлташĕсемпе ларать.

– Мĕн ячĕпе ĕçетĕр?

– Япала туянтăмăр та – çăватпăр.

– Мĕн туянтăр вара?

– Виçĕ кĕленче эрех.

* * *

Каччă:

– Мĕн, Лексуспа принц килессе кĕтетĕн-и?

Хĕр:

– Çук… Чи – кирли – çынни лайăх пултăр… Лексусĕ вара… хăть те хăш модель пултăр – пĕлтерĕшлĕ мар...


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. Т. 89875766562.

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т.8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**16.Сетку-рабицу** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**24.Грабли, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33.Гравмассу, песок, керамзит, щебень,** торф. Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. **Т. 89373866629.**

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозем, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**52.Пластиковые ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер. Доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 8-917-652-96-94, 8-927-667-95-88.

### ПРОДАЮ

**53.Отруби, зерно,** к/корм, сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ:** пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

**842.Срубы для бани.** Т. 372874.

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**257.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т. 8-927-667-33-68. Лиц. 5001001230 от 8.06.2007г. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

**843.Бычков,** коров, **тёлок,** овец, **свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

Ялта пурăнатăп, ĕçмен, туртман 30-40 çç. пĕччен хĕрарăмпа паллашатăп. Т. 89876714808.


# Сăмах каçмăш

**Владислав ПЛАТОНОВ /Шупашкар районĕ/ хатĕрленĕ**

**СЫЛТĂМАЛЛА:** 4. Чăваш истори ăслăлăхĕсен докторĕ Василий ... . 7. Хăнăхса çитсен – ...ра та аптăрамасть теççĕ. 9. Хĕлле валли хатĕрленĕ выльăх апачĕ. 10. Çăкăр ... калать. 11. Пăлан тытмалли мăйкăч. 12. Хĕвел ... енне сулăннă. 14. Азов тата Хура тинĕс хĕрринчи çур утравĕ. 16. Шкул ачин пĕчĕк «арчи». 17. Выртан ... мăкланнă, çӳрен ... якалнă /коларăш/. 18. Вăл çĕр-шывăн тĕп хули – Астана.

**АЯЛАЛЛА:** 1. Ача-пăчан ... сасси илтĕнет. 2. АПШ 16-мĕш президенчĕ ... Линкольн. 3. Чăваш писателĕ Мĕтри ... . 5. Украинăра кăларнă автомашина марки. 6. Пусма ... и. 8. Нарт-нарт кайăк. 9. Мордва Республикин тĕп хули. 13. Хаярлăх, çилĕ. 14. Лайăх... пасарта йăваланса выртмасть. 15. Çĕмел, купа.





### Иртнĕ номерте пичетленнĕ сăмах каçмăш хуравĕсем

**СЫЛТĂМАЛЛА: 5. Капелла. 6. Крахмал. 9. Русалка. 10. Арена. 12. Шăрка. 14. Урапа. 16. Пурак. 17. Хамса. 21. Анапа. 22. Тăрна. 25. Клака. 27. Рулетка. 28. Сутакан. 29. Уланова.**

**АЯЛАЛЛА: 1. Упăте. 2. Клара. 3. Канаш. 4. Ампар. 5. Канада. 7. Лутака. 8. Чабан. 11. Никулин. 13. Ăраскал. 14. Урата. 15. Атака. 18. Матрос. 19. Катет. 20. Ачапча. 23. Рента. 24. Арака. 25. Карап. 26. Аргон.**


« ХЫПАР » Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИПЕ МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор– тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



**РЕДАКЦИ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, 6 хут, “Чăваш хĕрарăмĕ”

**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70

**Электрон почти:** hypar@chtts.ru



Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 21 сехетре алă пуснă. Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ. Тираж 9061. Заказ 138.